24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ИЮЛЬ
8
ЫТЛАРИКУН
158 (5873) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисĕн, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ХĔРЛĔ ÇАРА ПУЛĂШМА — ХАЛĂХĂН ХĂВАТЛĂ ОПОЛЧЕНИЙЕ

ССР Союзĕнчи халăхсен аслă çулпуçĕ Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ чĕннине ответлесе пĕтĕм совет халăхĕ тăван çĕре сыхлама çĕкленсе тăрать. Совет патриочĕсен чĕрисем тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр юратнине тата улттавлă тăшмана ылханлă курайманлăхпа тапса тăраççĕ.

Халăхсен юратнă çулпуçĕн Сталин юлташăн чуна-чĕрене кĕрсе вырнаçакан простой сăмахĕсем фашистсем вăй-хурахла килсе тапăннă пирки пирĕн çĕршыв умне тухса тăнă пысăк хăрушлăха уçăн кăтартса пачĕç. Çак сăмахсем эпир пурсăмăр та тăшмана аркатса, пĕтерсе тăкассине шанса тăнине çирĕплетрĕç. Тимĕрлĕхпе йăвашчунлăх валли вырăн çук. Хавшак чĕреллисем валли те вырăн çук. Çак туйăм совет халăхĕшĕн паллă мар, — çакна ирсĕр тăшман çапăçусен малтанхи кунĕсенчех курса ĕненчĕ.

Хĕрлĕ Çар геройла хирĕç тăрса çапăçнипе пирĕн пĕтĕм халăх çеç мар мухтанать,— Хĕрлĕ Çар халиччен курманла çирĕп те вăйлă пулнинчен тĕнчери халăхсем тĕлĕнеççĕ. Çапăçусен хирне фашизм улталанă Германи салтакĕсен çĕршер пин виллисем тăкăнса юлнă. Вĕсене: эсир вăрçăллă çĕнĕ прогулкăна кайса килетĕр, тесе шантарнă. Вĕсем совет çĕрĕ çинче вилĕм тата масар тупрĕç. Нимĕçсен фашистла войскисен чи лайăх дивизийĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Хĕрлĕ Çăран пурне те пĕтерсе тăкакан вут-çулăмпа тӳсеймесĕр тăшман танкĕсемпе самолечĕсем металл чăмăркисем пулса тăраççĕ.

Хĕрлĕ Çар татти-сыпписĕр çапăçса фашистла ордăсен çулне пӳлсе тăрать. Хĕрлĕ Çăран пиншер танксемпе тата самолетсемпе хĕçпăалланнă тĕп вăйĕсем çапăçăва кĕреççĕ. Хуласемпе ялсем тăрăх халăхăн аслă та хăватлă ополченийĕ çĕкленсе тухать. Алла хĕçпăшал тытма пултаракансем пурте винтовка тытаççĕ.

Совет халăхĕ Сталин юлташăн çак сăмахĕсене пысăккăн хумханса итлерĕ: «Юлташсем! Пирĕн вăйăмсем çавтери нумай. Мăнкăмăлланса кайнă тăшман ăна часах курса ĕненĕ. Пирĕн çинче тапăннă тăшмана хирĕç вăрçма Хĕрлĕ Çарпа пĕрле нумай пиншер рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем çĕкленеççĕ. Пирĕн халăхăн миллионлă массисем çĕкленсе тухĕç. Мускавпа Ленинградри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çара пулăшма халăхăн нумай пинлĕ ополченине тума тытăнчĕç те ĕнтĕ. Кашни хуларах, ăна тăшман пырса тапăнас хăрушлăх хăратса тăрать пулсан, пирĕн халăхăн çакнашкал ополченине тăвас пулать, Германи фашизмне хирĕç пыракан пирĕн отечественнăй вăрçăра хамăрăн ирĕклĕхе, хамăрăн чыслăха, хамăрăн çĕршыва хамăрăн кăкăрсемпе хӳтлес тесе, мĕнпур ĕççыннисене кĕрешĕве çĕклес пулать».

Сталин юлташ чĕннине ответлесе çийĕнчех вунпар тата çĕршер пин заявленисенче тимĕр пек çирĕп ирĕк-камăл, никам кисретейми çирĕплĕх курăнать. Вĕсем боевой хастарлăхпа тапса тăраççĕ.

Граждан вăрçин ветеранĕсем çĕкленсе тăраççĕ. Вĕсем тепĕр хут çамрăкланаççĕ. Куçсем çутă çулăм пек ялкăшма пуçласçĕ. Мускаври тормоз заводĕнче пулнă митингра мастер Шевченко юлташ çапла каланă:

— 54 çула çитрĕм пулсан та, эпĕ винтовка тытма пултаратăп. Граждан вăрçин çулĕсенче эпĕ доброволец пулса Хĕрлĕ Çара кайрăм. Çулпуç чĕннине ответлесе халĕ мана халăх ополченине илме ыйтатăп. Тăшмана йăлтах пĕтерсе тăкичченех çапăçма пулса тупа тăватăп.

Ленинградра граждан вăрçин участникĕсем халăх ополчени подразделенийĕсен малти ретĕнче пыраççĕ. Пĕтĕм çĕршыв тăрăх заводсемпе фабрикăсем халăх ополченийĕ валли боевой кадрсем параççĕ.

Тăван çĕршыва хӳтлесе хăварас ĕçшĕн хăйсене пĕтĕмпех пама, мĕнпур вăл тата пурнăçа та пама пулса тăвакан тупасенче патриотла халама çук пысăк хавхалану тапса тăрать.

Хăватлă колхоз хресченĕсем çĕкленеççĕ. Фашистла вăрă-хурах совет çăкăрне нихăçан та кураймĕ, колхоз уйăрĕсенче тӳрĕ кăмăлла тăрăшса ĕçлесе ӳстернĕ тырпулпа фашистла вăрăхурах нихăçан та усă кураймĕ!

Украинăри колхозниксем вĕçĕ-хĕррисĕр тарăхса алла хĕçпăшал илеççĕ. Германин халăр, çăткăн, ултавлă тискер-кайăкне вĕсем лайăх пĕлеççĕ! 1918 çулта ширĕн çĕршыв çине тапăнса кĕнĕ тăшман халăха çака-çака вĕлернине халĕ те астăватпăр. Халăхăн партизанла вăрçинче чапа тухнă хăйсен геройĕсемпе кашни ял мухтанать. Ун чухне Украинăри тулă тăшманăн пырне ларчĕ. Хаклă тӳлерĕ вăл хăйĕн çаратăвĕсемшĕн. Украинăри хресченсене Германи генералĕсем те, Германи палачĕсем те хăратаймарĕç. Захватчиксен ури айĕнче çĕр çунчĕ.

1918 çулта Украина хресченĕсем Германи тискер-кайăкĕсене пăнă отпор çинчен асаилнисем Украина халăхĕ хăйне пусмăрлакансене хирĕç нумай ӳмĕрсем хушши кĕрешни çинчен патриотла асаилнисемпе пĕрлешсе каяççĕ. Запорожье колхозникĕсен возванийĕнче Запорожье сечин геройла чунхавалĕ тепĕр хут чĕрĕлсе тăрать:

«Тăван çĕршыва кăкăрсемпе хӳтлеме тăрса, эпир юнлă Гитлера запорожегсем пек çапла калатпăр: эпир санăн войскусенчен хăрамастпăр. Сана хирĕç эпир çĕрпе тата шывпа çапăçатпăр!»

Халăх ополченийĕ — аслă та хăрушă вăй! Калама çук пысăк çĕршывăн халăхне — тăшмана аркатса, çĕмĕрсе тăкас пĕр туйăмпа, тимĕр пек çирĕп пĕрлĕхпе кар тăрса тухакан халăха никам та çĕнтерме пултараймасть.

Вырăс çĕрне туртса илме, аслă вырăс халăхне чуралантарма хăтланнă тăшмансем халăх ополченийĕн вăйне хăйсем çинче пĕр хутчен мар тӳссе курнă. 1612 çулта Минин тата Пожарский ертсе пынă халăх ополченийĕ Польша çарне çĕмĕрсе тăкса, захватчиксене тăван çĕр çинчен хăваласа янă. Мăнкăмăлланса кайнă каппайчăк тăшмана аркатса тăмăллах çапса салатнă çак войскăн чапĕ халĕ те халăх асĕнче пурăнать.

Халăх ополченийĕ 1812 çулта аслăран та аслă полководецăн Наполеонăн çарне çапса салатма тата çĕмĕрсе тăлма вырăс çарне пулăшнă. Çав çара никам çĕнтерейми çар тесе шутланă. Вăл Европăри правительствăсене шиклентерсе тăнă. Унăн умĕнче Европăри вăл вăхăтри чи лайăх çарсем хăйсен ялавĕсене тайнă. Анчах та Наполеон вырăс халăхĕн çĕрĕ çине тата никама пăхăнмасăр пурăнмалли положенийĕ çинче алă çĕклесен, ăна никам та вилĕмрен çăлса хăварма пултарайман. Завоевателе хирĕç халăх стена пек çĕкленсе тăнă. Хресченсем партизанла вăрçă пуçланă. Выçă французсем вырăс çăкăрĕ çине калăхах ăмсанса пăхнă. Халăхăн партизанла вăрçи вĕсен çулне пушхир туса хунă. Наполеон çарĕ çĕршыв ăшнелле мĕн чухлĕ шалалла кайса пынă, унăн вилĕмĕ те çавăн чухлĕ хăвăртрах çыхнă. «Никам çĕнтерейми» çар йăлтах тенĕ пек ют çĕр çинчи уйăрсенче выртса юлнă. Пит сахаллăшĕ çеç тарса çăлăннă.

СССР халăхĕсем 1918—1920 çулсенче хăйсен тăван çĕрне пусмăрçăсенчен сыхлама никам тытса чарайми лавина пек сиксе тухрĕç. Совет çĕршывĕнчи мĕнпур халăхсем вырăс халăхĕне пĕр ретрех пулчĕç. Артиллерипе, танксемпе, самолетсемпе питех те вăйлăн хĕçпăшалланнă çарсем вĕсем умĕнче арпан-кĕрпе пек саланса кайрĕç.

Халĕ те, пирĕн историн хаяр çулталăкĕнче, çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнă чухне халăх çĕнĕрен стена пек çĕкленсе тăрать. Пирĕн çĕршывра тăван çĕршыва юратакан кашни çын халĕ алла винтовка тытать. Тăван Хĕрлĕ Çар патриотла хĕрӳллĕ сасăсем илтет, вĕсенчен витĕмлĕ пулăшу илет. Çакă унăн вăйĕсене вунă хут ӳстерет.

Совет çĕрĕн кашни пусăмне Хĕрлĕ Çар çеç мар, тата пĕтĕм совет халăхĕ сыхлать, малашне татах та ытларах тимлĕн тăрса кашни пусăм çĕре хĕрӳллĕн сыхлĕ. Совет çĕрĕн кашни татăкĕ захватчикшăн хаклаларать. Çак тӳлев кĕрешӳн кашни сантиметĕнче хакланса пырать. Хĕрлĕ Çар, халăх ополченецĕсен аслă резервисем тата Хĕрлĕ Çăран мухтавлă та геройла помощникĕсем — тăшман тылĕнчи, вăл оккупациленĕ районсенчи партизансем хăватлăн пыра-пыра çапнине тăшман тӳссе тăраймĕ. Фашистла разбойниксем халĕ вăхăтлăха хуçаланса пурăннă çĕрте партизанла движени сарăлса пырать.

Партизансен геройла отрячĕсем тăшман тылне дезорганизацилеççĕ, унăн чĕрĕ вăйне, хĕçпăшалĕсене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ, складсене, нефть цистернисене сирпĕтсе аркатаççĕ, çыхăнава пăсаççĕ, вăрмансене вут тĕртсе çунтараççĕ, тăшмана пĕр татăк çăкăр, пĕр тумлам шыв памаççĕ.

Асса кайнă тăшман хăйне тылра йĕри тавра хупăрласа илнĕ крепоçри пек туять.

Асса кайнă тискер-кайăка пурпĕрех пулмалли тавăру кĕтет. Ăна пĕтерсе тăкатпăрах. Этемлĕх умне килсе тухнă фашистла хăрушлăх сирĕлсе каятех.

(«Правда» умстатьи, июлĕн 7-мĕш).

Заем укçине 10 305 тенкĕ пухнă

ШАХАСАН. Уйкас Кипек ялсоветĕнче Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне 10.305 тенкĕлĕх сĕннă. Колхозниксем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне лайăх туса пынипе халĕ 10.305 тенкĕ укçа пухса перекет кассине кайса хывнă.

Е. НИКИТИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 5-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 5-мĕшĕнче кăнтăрла **Остров, Борисов, Бобруйск** тата **Новоград-Волынск** енĕсенче пирĕн войскăсем противникăн механизированнăй пысăк чăçĕсене хирĕç хаярăн çапăçнă. Июлĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух ирхине **Остров** енче пирĕн войскăсем наступлени пуçланă, противника Остров хулинчен кăнтăр еннелле хăваласа янă, унăн 140 танкне тата унăн моторизованнăй пехотин чылай пысăк пайне пĕтерсе тăкнă.

Полоцк енче противник **Западная Двина** юханшывĕ урлă каçма хăтланнă. Пирĕн войскăсем, татăклă контратака туса, противника Западная Двина юханшывĕн кăнтăр хĕрринелле хăваласа янă.

Лепель районĕнче пирĕн войскăсем, кашни чикĕнех вăйлăн хӳтлесе, противникăн мотомеханизированнăй пысăк чăçĕсен наступленине тытса чарса тăраççĕ.

Борисов енче хаяр çапăçусем сарăлса кайнă, çав çапăçусенче пирĕн войскăсем темиçе хутчен те контратакăсем тунă. Пирĕн артиллерирен пенипе, танксемпе авиаци пыра-пыра çапнипе противникăн пысăк çухатусем пулаççĕ.

Бобруйск енче пирĕн войскăсем противникăн пур атакисене те ăнăçлăн сирсе янă, унăнне 50 танк пĕтерсе тăкнă.

Çапăçусем çакна кăтартса панă: çак енсенче противник, пысăк çухатусем тӳснине пула, хăйĕн активлăхне чылай чакарнă.

Тарнополь енче пирĕн войскăсем, калама çук вăйлăн çапăçса, противникăн пысăк мотомехчăçĕсене кăнтăралла кайма чарса лартнă. Июлĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух ирхине противник хăйĕн мотомехчăçĕсемпе **Новоград-Волынск** енче каллех наступлени пуçланă, унта халĕ хаяр çапăçусем пыраççĕ. Пирĕн авиаци çав кун кунĕпех противникăн танковăй тата моторизованнăй чăçĕсене пит вăйлăн пыра-пыра çапнă тата Румынин **Констанца, Сулин, Плоэшти** хулисем çине бомбăсем пăрахнă.

* * *

Совет çыннисем хăйсен çулпуçĕ — Сталин юлташ чĕнсе каланине патриотла ĕçсем тунипе, ĕçре хастарлăх кăтартнипе ответлеççĕ. Совет халăхĕ геройла Хĕрлĕ Çарпа мухтавлă Хĕрлĕ Флота пулăшма мĕнпур вăйсене мобилизацилет. Хĕрлĕ хĕрес обществин Ленинград обкомне Новгородран, Окуловкăран, Гдовран, Лугăран тата облаçри ытти районсенчен совет патриоткисем коллективлăн тата пĕчченшерĕн çырнă заявленисем пĕрмаях пырса тăраççĕ, çав заявленисенче вĕсем хăйсене санитарнăй дружинăсене илсе фронта яма ыйтаççĕ.

Винница облаçĕнчи колхозницăсем, пурĕ виçĕ пин çын, хăйсен упăшкисемпе шăлнĕсем—Хĕрлĕ Çара кайнă трактористсем вырăнне ĕçлеме тăнă.

Бакури нефть промыслисемпе заводсем пурте планран ирттерсе пиншер те пиншер тонна горючи параççĕ. «Отечественнăй вăрçă кунĕсенче эпир нефть кăларассине нумай ӳстертĕмĕр»,—тесе пĕлтереççĕ нефтяниксем.

Тутар республикинчи Ленин, Сталин тата Киров ячĕпе тăракан тата ытти вунпар колхозсем государствăна ашкакай, сĕт тата çăм тăратас плана срокчен малтан тултарнă, халĕ вĕсем продукцине планлă поставкăсенчен ирттерсе параççĕ.

Совет халăхĕн вăйăсем вĕçĕмсĕр нумай. Пирĕн çине тапăннă тăшмана хирĕç вăрçма рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин нумай миллионшар массисем çĕкленеççĕ.

* * *

Слепцов юлташ командир пулса ертсе пыракан танковăй часть противникăн Р. районĕнчи мотомеханизированнăй колоннине пĕтерсе тăкма приказ илнĕ. Тăшманăн танковăй пысăк вăйĕсемпе тата бомбардировщиксемпе вăйлăн çапăçса, Слепцов юлташăн колонни тăшмана çĕмĕрсе тăкнă. Фашистсем контратака тума вăйсем пухма хăтланнă тата инçетри позицирен артиллерирен вăйлăн пеме пуçланă. Пирĕн танксен группи калама çук вăйлăн пырса çапса нимĕçсен артиллери позицине пĕтерсе тăкнă. Çапăçу нимĕçсен танковăй соединенине пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнипе вĕçленнĕ. Совет танкисчĕсем тăшманăнне 300 танк пĕтерсе тăкнă, инçете перекен орудисене 12 туртса илнĕ тата 500 çын ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Эскадрилья командирĕ капитан Гастело тĕлĕнмелле геройлăх кăтартнă. Тăшман зениткинчен пенĕ снаряд унăн самолечĕ çинчи бензин бакне лекнĕ. Хăюллă та паттăр командир çулăм çавăрса илнĕ самолета противникăн пĕр çĕре йышлăн пухăнса тăнă автомашинисем тата бензин тултарнă цистернисем çине чăмтарнă. Германин вунпар машинисемпе цистернисем геройăн самолечĕпе пĕрлех взрыв пулса сирпĕнсе кайнă.

* * *

Фронтăн пĕр участокĕнче Германин танковăй войскисенчи ефрейтор совет войскисем енне каçнă, вăл ирттнĕ вăхăтра «Франц Мюллер и Краммер» ятлă суту-илӳ фирминче рабочи пулса ĕçленĕ. Ефрейтор службăра тăнă танковăй часть Испанире, Польшăра, Францире тата Грецире пулнă. «Пире, нимĕç салтакĕсене, пĕтĕм тĕнчипех кураймаççĕ, — каласа парать вăл. — Хамăр пĕтесрен пирĕн яланах сыхланмалла пулнă. Польшăра пире çăлти шыва ĕçме чаратчĕç, мĕншĕн тесен, пирĕн çине тарăхнă Польша халăхĕ çăлти шывсене тĕрлĕ япаласем ярса пăснă. Эпĕ ирĕклĕ этем пулма шутларăм та вырăссем патне тарса каçрăм».

* * *

Противник йышăннă территорире стихийлă майпа массăллă партизанла движени йĕркеленсе пырать. Хăйсем патĕнчи вырăнсене лайăх пĕлсе, партизансем фашистла захватчиксен тылĕнче геройла çапăçаççĕ. Каялла куснă чухне Хĕрлĕ Çар чăсĕсем çĕмĕрсе, аркатса хăварнă çулсене, кĕперсене нимĕçсем питĕ хыпаланса юсаççĕ, вĕсене пур çĕрте те охранăсем нумай пиншерĕн тăратса тухма тивет. Фашистла военнăй цензура пит вăйлă пулсан та, партизанла отрядсен геройла ĕçĕсем çинчен калакан сведенисем ютçĕршывсенчи тĕрлĕрен хаçатсен страницисенче пичетленсе тухаççĕ. Швецири «Афонбладет» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла кăтартса парать: фашистла войскăсен тылĕнче партизанла движени «нимĕçсене малалла куçса пыма чăрмантарать» тата «нимĕçсене пысăк сиен кӳрет». Стрелоксем пытанса ларнă çĕртен ординарецсем çине переççĕ, çавна пула вĕсем валли эскортсем организацилемелле пулса тăнă. Апатçимĕç повозкисем тĕлĕшпе те çавнашкалах пулса пырать, вĕсем халĕ танксем хӳтленипе кăна çӳреççĕ.

* * *

Н. районĕнче унта пурăнакан икĕ çын нимĕç парашютистне-диверсантне тытнă, вăл—пехотăн моторизованнăй 88-мĕш полкĕнчи ефрейтор Вильгельм Пастельман пулнă. Пастельман каласа панă тăрăх, вырăссемпе вăрçма нимĕç салтакĕсене вăйпа ирĕксĕрлесе хăваласа янă. Н-ски стрелковăй часть тытăкăна илнĕ нимĕç летчикĕ лейтенант Вильгельм Гундер, центральнăй Германире çуралнăскер, çапла каласа панă: «Совет авиацийĕ пек нумай йышлă тата техника тĕлĕшĕнчен питех те чаплă авиацие нимĕçсем халиччен тĕл пулман-ха».

* * *

Хĕрлĕ Çар чăсĕсен героизмĕ çинчен ютçĕршывсенчи мĕнпур хаçатсем тимлĕн çыраççĕ. Хаçатсем красноармеецсем фашистла агрессорсене пит вăйлăн хирĕç тăрса çапăçни çинчен калакан фактсене илсе кăтартаççĕ, совет çарĕсенчи пехотинецсем, летчиксем, танкистсем кăтартакан тĕлĕнмелле хăюллăхпа паттăрлăх çинчен калаçа параççĕ. Японири «Ници-ници» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла паллă тăвать: «Хĕрлĕ Çар халиччен нихăçан пулманла вăйлăн хирĕç тăрса çапăçать, вăл питех те тĕлĕнмелле хастарлăх кăтартать, нимĕçсем ун пек пулассине кĕтмен те». «Ници-ници» хаçат хăйĕн корреспонденчĕ пĕлтернине «Совет çарĕнчи салтакăн хăюллăхĕпе паттăрлăхĕ çинчен калакан хăюллăхĕпе паттăрлăхĕнчен çӳлте тăрать» текен заголовокпа пичетлесе кăларнă. Турцири «Сон тельграф» хаçат çапла çырать: «Хĕрлĕ Çар хирĕç тăрса çапăçасси пĕртенимĕçсем кĕтнĕ пек пӳлмарĕ. Нимĕçсен ирĕксĕрех хăйсем шутласа хунинчен темĕн чухлĕ пысăкрах вăйсене тăратмалла пулса тăнă. Германи çарĕн пысăк çухатусем пулса пыраççĕ».

Çапла ĕнтĕ, тĕнчери мĕнпур хаçатсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем халиччен курман геройлăх, хастарлăх кăтартнине тата вĕсем хăйсен Тăван çĕршывне вĕçĕмсĕр парăнса тăнине ĕнентереççĕ. Çак енчен илсен, Германири радио: Минск патĕнче совет салтакĕсен пĕр пайĕ нимĕçсен енне тарса каçнă, тесе пĕлтерни—çавтери киревсĕр элек сарни пулса тăрать.

* * *

Гитлеровецсем Румынире çĕнсе илнĕ çĕршыври пек хуçаланса пурăнаççĕ. Вĕсем продовольствин мĕнпур юлташкийĕсене те сăптăрса илеççĕ, халăха выçă тăратса хăвараççĕ. Румыни халăхĕ оккупантсен тата вĕсен лакейĕсемпе Антонеску правительствинчи предательсен режимĕ çине пĕтĕм чĕререн тарăхать, унпа вăл килĕшмест. Çак тарăхупа килĕшменлĕх уççăнах хĕçпăаллă выступленисем тăвасси çине куçса пырать. Германии Румынири войскисен командованийĕн ирĕксĕрех ятарласа приказ кăлармалла пулнă, çав приказра: сăтăрла тата террорла актсем тунипе аййăпа кĕнисене пурне те «çийĕнчех вĕлермелле» тăваççĕ, тесе хăратнă.

Анчах та çак тискер мерăсем хăйсен тĕллевĕсене пурнăçа кĕртеймеççĕ. Нумаях пулмасть Роман тата Фокшаны ятлă уезднăй хуласем хушшинчи шоссе çулĕ сывăхĕнче Румынин хĕçпăаллăннă патриочĕсемпе нимĕç-румын салтакĕсем хушшинче пысăк çапăçу пулса иртнĕ. Румынири нумай хуласемпе ялсенче румын халăхĕ нимĕçсен тата правительство войскисене хирĕç хĕçпăалпа кĕрешесси сарăлса пырать.

Нимĕçсен фашистла войскисем йышăнса илнĕ чикĕри совет хулисемпе районĕсенчи гитлеровецсем мирлĕ пурнăçпа пурăнакан граждăнла халăх тĕлĕшпе тĕлĕнмелле тискерле, хăрушла ĕçсем тăваççĕ. Ломжа хулине йышăнса хыççăн, Хĕрлĕ Çар чăсĕсемпе пĕрле тухса кайма ĕлкĕреймен çемьесене нимĕç офицерĕсем урама хăваласа тухнă та, вĕсене çав тери тискеррĕн асаплантарнă: нимĕн хӳтлăхсĕр хĕрарăмсемпе ачасене татăкăн-татăкăн касса вакланă, урисемпе аллисене касса татнă, куçĕсене тĕксе шăтарнă.

Гитлерла летчиксем самолетсем çинчен мирлĕ пурнăçпа пурăнакан халăх çине переççĕ, хăш чухне ачасем çине те переççĕ. Фашистла стервятниксенчен лĕри нумаях пулмасть грузовой автомашина çине тапăннă, вăл автомашинăпа хĕрарăмсемпе ачасене тыла илсе кайнă пулнă. Пулеметран темиçе хутчен персе, бандит, техник Зеленко арăмне вĕлернĕ тата виçĕ çулти арçын ачана амантнă.

* * *

Чехири «Вечер» ятлă хаçатра, — вăл хаçат Прага хулинче нимĕçсен укçи тенкипе тухса тăрать, — пĕр Крыхталек текенскерĕн статьи пичетленсе тухнă. Статья кулăлла, фантастикла шухăшсемпе тулса ларнă. Опытлă мошенник çапла ĕнентерме хăтланать: вăл ултă çул каялла Совет Союзĕн США-ри посолĕпе Уманский юлташпа калаçнă пулать, Уманский юлташ ун умĕнче США-ри, Франции, Китайри, çитменнине тата Индири! коммунистла революцин перспективĕсем çинчен калаçнă пулать. Суя хыпарсем саракан Берлинри фабрикăн продукцийĕ çине пĕтĕм цивилизованнăй тĕнче тахçанах йĕрĕнсе пăхать ĕнтĕ, çавăнпа та гитлеровецсен черетлĕ суя хыпарне фашистсен тӳлевлĕ агенчĕ нимĕç хушамачĕпе мар, чех хушамачĕпе туртса кăларнă. Фашистла заправилăсем икĕ аслă çĕршыв — США-па СССР туслăхĕнчен сахал мар шикленеççĕ пулмалла.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Вăрçă вăхăтĕнче халăх хушшинче шиклĕх кăларакан суя хыпарсене сарнăшăн ответ тыттарасси çинчен

Вăрçă вăхăтĕнче халăх хушшинче шиклĕх кăларакан суя хыпарсем сарса айăпа кĕнĕ çынсене, вĕсен ĕçĕн характерне кура вĕсене закон тăрăх пысăкрах наказани памалла мар пулсан, военнăй трибуналăн приговорĕ тăрăх 2 çултан пуçласа 5 çула çити срокларах тĕрмене хупса лартмалла тăвас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июлĕн 6-мĕш.

ССР Союзĕнчи Хĕрлĕ хĕреспе Хĕрлĕ çурăйăх обществисен Союзĕ панă протест

ССР Союзĕнчи Хĕрлĕ хĕреспе Хĕрлĕ çурăйăх обществисен союзĕ Женевăна, Хĕрлĕ хĕреспе Хĕрлĕ çурăйăхăн Пĕтĕм тĕнчери Комитетне çакăн пек телеграмма янă: «СССР территорийĕ çине тапăнса кĕнĕ нимĕç войскисем санитари формированийĕсемпе учрежденийĕсем çине пĕрре кăна мар пырса бомбăсем пăрахнине кирĕç ССР Союзĕнчи Хĕрлĕ хĕреспе Хĕрлĕ çурăйăх обществисен Союзĕ татăклă протест парать. Июнĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшне çити вăхăтра нимĕçсен бомбардировщикĕсем Гродно, Лида Минск, Смоленск хулинчи госпитальсем çине атака тунă, вĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Вĕсем, кунсăр пуçне, Санитари учрежденийĕсем валли Женевăри Конвенципе тунă уйăрса илмелли паллăсем уçăн палăрса тăнине пăхмасăр, Львов хулинчи санитари поезчĕ çине тата полевой санитари учрежденийĕсем çине сывлăшран пырса бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнă чухне медицина персоналне, аманнисемпе чирлисене, госпитальсенче сывалса пурăннăскерсене, сиен кӳнĕ».

Оборонăна тĕреклетме

Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз председателĕ С. К. Коротков юлташ июлĕн 7-мĕшĕнче ВКП(б) Чăваш Обкомне çакăн пек телеграмма янă:

«Суракине кăтартуллăн ирттернĕшĕн пирĕн колхоза памалла тунă премипе уçсине оборона фондне куçарма ыйтатпăр. Фашистла бандитсене çĕмĕрсе тăкас тесе хамăрăн Хĕрлĕ Çара мĕнпур средствăсемпе çирĕплетсе пырăпăр».

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 6-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 6-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле **Остров, Полоцк, Борисов** тата **Новоград-Волынски** енĕсенче тата фронтăн **Бессарабири** участокĕнче çĕрĕпех вăйлă çапăçусем пынă.

Фронтăн ытти енĕсемпе участокĕсенче çапăçусем вырăнĕ-вырăнĕпе пулса пынă, разведчиксен çĕрлехи шыравĕсем пулнă.

Остров енче çĕрле вăйлă çапăçусем пынă тата халĕ те иртеннех пыраççĕ.

Полоцк енче пирĕн войскăсем противникăн пур атакисене те сирсе янă, **Западная Двина** юханшывĕн чиккине çирĕплĕн тытса тăраççĕ. Юханшыв патне пырса кĕмелли вырăнта пулнă çапăçусенче нимĕçсен пиншер виллисем, çĕмĕрсе тăкнă танксемпе самолетсем выртса юлнă. Наступлени тăвакансен чылай пысăк пайĕ юханшыв тĕпĕнче вилĕм тупнă.

Борисов енче июлĕн 5-мĕшĕнчех пирĕн контратака тăвакан войскăсем çĕрĕпех хыттăн çапăçнă. Çапăçусем халь те пыраççĕ.

Бобруйск енче противник темиçе хутчен те наступлени тума хăтланнă, анчах та пирĕн войскăсем унăн хăтланăвĕсене пĕтĕмĕшпех сирсе янă, ăна пысăк çухатусем кӳнĕ.

Новоград-Волынск енче пирĕн войскăсем, пит вăйлăн çапăçса, противникăн мотомеханизированнăй пысăк чăçĕсен наступленине чарса тăраççĕ.

Фронтăн **Бессарабири** участокĕнче нимĕçсемпе румынсен пехотин, утлă çарĕн тата танкĕсен пысăк группировки **Бельцы** еннелле наступлени пуçлама хăтланнă. Пирĕн войскăсем, пит вăйлăн хирĕç тăнипе, çак енче противник наступленине чарса тăраççĕ.

Тĕплĕн шута илнĕ тăрăх, пирĕн авиаци июлĕн 4-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче противникăнне малтан пĕлтернисенче кăтартнă пек 43 самолет мар, 61 самолет персе антарнă, пирĕн 29 самолет пĕтнĕ.

* * *

П. юханшыв урлă тăшман территорийĕ çине шаппăн каçса, Егоров юлташăн подразделенийĕ лайăхăн маскировка туса вырнаçнă, противник çине кĕтмен çĕртен тапăннă. Миномет расчечĕ отлично ĕçленĕ, вăл противникăнне огневой точкисене 4 тата ручной пулеметсем 2 пулемет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем штыксемпе атака тунине чăтаймасăр, нимĕçсемпе румынсен салтакĕсем хĕçпăалĕсене пăрахса парăннă, вĕсене тыткăна илнĕ. Тăшманăн темиçе çĕр салтакĕ, 3 офицер, 3 оруди, станковăй пулеметсем 13 пулемет пирĕннисен аллине юлнă.

* * *

Нимĕçсен гидросамолечĕсем совет сыранĕсем çине çĕрле пырса бомбăсем пăрахма хăтланаççĕ. Действующи флотăн прожекторисчĕсем тăшман бомбардировщикĕсене пĕтерсе тăкма зенитчиксене ăнăçлăн пулăшаççĕ. Çак кунсенче Н. хули патнелле фашистсен самолечĕсен ушкăнĕ пынине курнă. Фашистла летчиксем совет прожекторĕсен вăйлă çуттинчен тухса тарайман. Пилĕк бомбардировщикран 2-шне пĕтерсе антарнă, вĕсем шыв хĕрринчен 200 метра ӳкнĕ. Ыттисем, зенитнăй орудисенчен тĕл пенине тӳсеймесĕр, бомбăсене тинкĕс çине нимĕн йĕркесĕр пăрахса каялла тарнă.

* * *

Германин тыткăна лекнĕ салтакĕсем партизансен пит нумай выступленийĕсем çинчен пĕлтереççĕ. Пирĕн разведчиксем тыткăна илнĕскер, автоцистер-

Малалли 2-мĕш страницăра

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Малалли, пуçламĕшĕ 1-мĕш страницăра)

на салтак-шофере Ганс Шмидт, фронти танковăй чăссем валли горючи турттаракан автомашинăсен колоннине çавтери пысăк йывăрлăхсене çĕнтерме тивни çинчен каласа панă. Кашни тĕме вырăн, çул хĕрринчи кашни йывăç тĕммиех,—каласа парать тыткăна лекнĕскер, — партизансене пытанмалли лайăх вырăн шутланать. Командованине горючи турттаракан колоннăсене сыхлама ытларах та ытларах танксем уйăрма тивет. Çак мерăсене пăхмасăрах, салтак-водительсенчен чылайĕшĕ фронта каймалли çул çинче хăйсене валли вилĕм тупнă.

Танксене ирттерсе ярса,—каласа парать малалла тыткăна лекни,—партизансем автомашинăсем çине перессĕ, водительсене вĕлерессĕ тата цистернăсене вут тивертсе çунтарассĕ. Çавтери сисмеллĕ мар хăвăрт пырса тапăнассĕ, танкистсем нимĕн тума та пĕлмессĕ. Танксен командирĕсем вара, хыпаланса ӳксе, вăрман çинелле пеме пуçласçĕ. Ганс Шмидт çапла пĕлтернĕ: партизансем курăнма пуçланă хыççăн, нимĕç салтакĕсем фронта çĕрле каяссинчен тĕрлĕ сăлтавсемпе пăрăнаççĕ.

* * *

Кривоносов юлташăн подразделенийĕ, оборонăн малтанах хатĕрлесе хунă позицийĕсенче вăйлăн çапăçнăскер, каялла куçма приказ илнĕ. Кривоносов юлташ хăйĕн боецĕсене çапăçуран илсе тухнă. Каялла куçнă чухне подразделени нимĕçсен мотополкне тĕл пулнă, атакă туса ăна пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă. Нимĕçсенчен нумайĕшне, хăйсен командирĕпе пĕрле, вĕлернĕ е амантнă, ыттисем тарма пуçланă. Совет боецĕсем трофейĕсене нумай турттса илнĕ, вĕсен шутĕнче грузовой машинăсем, танксене хирĕç кĕрешмелли тупăсем, велосипедсем, ручной пулеметсем, пистолетсем, çавăн пекех документсемпе карттăсем пур.

* * *

Белоруссири М. чугунçул станцийĕ çывăхĕнче каçхине самолет курăннă. Ытла çӳлтех мар вĕçекен самолет çинчен фашистсен парашют десанчĕ аннă. Совет патриочĕсем—çав вырăнти ялта пурăнакан çынсем, станци работникĕсем тата поезд çинчи пассажирсем сакăр диверсанта сийĕнчех хупăрласа илнĕ. Диверсантсене ухтарсан, фашистсем çумĕнче автоматла пистолетсем, взрыв тумалли япаласем, телеграфпа телефон проводисене татмалли хачăсем тупнă. Совет çыннисем сыхăлăхлă пулни фашистла диверсантсене сăтăр тума паман.

* * *

Германи фашизмĕ оккупацилеНĕ çĕршывсенче захватчиксене хирĕçле движени пĕрмаях вăйланса пырать. Голландире халăх хумханăвĕ хăратмаллах сарăлса кайнă пирки, Германи войскисем халăх хумханнине хĕçпăшалпа путарса лартма тытăннă, оккупантсене хирĕç тăракан граждансене вырăнтах персе вĕлерме тапратнă.

Норвегире нумай çуртсем çумĕнче «Çĕнĕ йĕрке выçлăха пĕлтерет», тесе çырса çапнисем час-часах пулаççĕ. Çара намăслантарнă пирки пуçланă ĕçсем тăрăх Германин çар судĕсем йышăнакан приговорсен хисепĕ кунран кунах ӳссе пырать. Нумаях пулмасть Норвегире патриотсем пуляран çимĕçсем хатĕрлекен пысăк фабрикăна вут тĕртсе çунтарнă. Оккупациллĕ фашистла влаçсем хăйсен вăрттăн кăларнă циркулярĕнче çапла палăртнă: «Норвеги халăхĕн шухăш-кăмăлĕсем тата хăйне тыткаласси юлашки вăхăтра, эпир мерăсем йышăннине пăхмасăрах, питех те çивĕчленсе кайрĕ».

Польшăн нимĕçсем оккупацилеНĕ территорийĕнче партизансен ĕçĕсем сарăлнăçемĕн сарăлса пыраççĕ. Дробьсемпе авăрласа пемелли пăшалсемпе, револьверсемпе тата винтовкăсемпе хĕçпăшалланса, Польша партизанĕсем хăйсен пусмăрçисене хирĕç паттăрăн кĕрешеççĕ.

* * *

Совет патриочĕсем Сталин юлташ радио тăрăх тухса калани çине хăйсене шеллемесĕр стахановла ĕçлеНипе ответлеççĕ. Улан-Удэ хулинчи рабочисем Петренко тата Николаенко юлташсем июлĕн 4-мĕшĕнче производствăллă программăна 500 процент ытла тултарнă. Бурят-Монголири колхозниксем 1941 çулти поставкăсен шучĕпе 1940 çулти тырпулран аванс йĕркипе 70 пин пăт тырă панă. Республикăри колхозниксем аш-какай тăратмалли çулталăклăх плана 130 процент тултарнă.

Мускаври тормоз заводĕнчи революционерсем Фомина, Коргин тата Сидельников юлташсем ирхине сакăр сехетрен пуçласа кăнтăрла иртни пĕр сохетчен сменăри нормăна пĕтĕмĕшпех тултарнă, çакăн хыççăн вĕсем продукцие планран ытлашши панă. 1-мĕш №-лĕ цехри слесарь-сборщик Горностаев юлташ сменăри нормăна кăнтăрла иртни пĕр сехет тĕлне 175 процент тултарнă. Дзержинский ячĕпе тăракан чугунçулăн Москва—I станцинчи составитель Честноков юлташ поездсене нормă тăрăх 27 минута вырăнне 13 минута хушшинче йĕркелесе çитерет.

Шупашкар хулинчи партактивăн пухăвĕ

Шупашкар хулинчи партактивăн июлĕн 5-мĕшĕнче пулнă пухăвĕнче ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков юлташ хальхи вăхăт тата парторганизацисен задачисем çинчен доклад турĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче Совет çĕршывĕ умне хăрушлăх тухса тăни çинчен, парти организацисен халĕ çак хăрушлăх вăхăтĕнче мĕнле ĕçлемелли çинчен тĕплĕн каласа панă.

— Фашистла заправилăсен асса кайнă ушкăнĕ, — тет Чарыков юлташ, — вăрçă авантюрисенче пăтрашса кайнăскер, пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн тапăнчĕ. Германи фашизмĕ, танксемпе тата авиацине питĕ вăйлăн хĕçпăшалланнăскер, эпир тара ухтарса ĕçленĕ çĕрсене туртса илес, хамăр вăйпа ĕçлесе тунă тырпула тата нефте туртса илес, помещиксен власĕне, царизма кайлла тавăрас, ССР Союзĕнчи мĕнпур халăхсен наципллĕ государственноçне пĕтерсе хурас тĕллеве лартать. «Çапла вара, ĕç Совет государствин пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, ССР Союзĕнчи халăхсем ирĕклĕн пурăнасси, е вĕсем чураляха кĕрсе ӳкесси çинчен пырать» (И. В. Сталин). Усал тата ултавлă тăшман тапăннинчен хамăр çĕре сыхласа, пирĕн Хĕрлĕ Çар, Хĕрлĕ Флот тата Совет Союзĕнчи мĕнпур халăх фашистла йыткĕтĕвĕсене хирĕç отечественнăй аслă вăрçăна туса пырать.

Чи хаяр та ултавлă тăшмана—Германи фашизмне хирĕç вилĕмлĕ сапăçăва кĕрсе кĕрешнĕ вăхăтра, хамăрăн совет государствине сыхласа хăварас, çынçиенсене, çынна курайман Германи фашизмне çапса аркатас тĕлĕшпе парти организацийĕсем умĕнче питĕ пысăк тата ответлă задачăсем тăрасçĕ.

Парти организацисен,—тет малалла Чарыков юлташ,—пирĕн çĕршыв умне тухса тăнă хăрушлăха тарăннăн ăнланмалла. Хамăрăн пĕтĕм ĕçе халех вăрçă вăхăтне кирлĕ пек урăхлатса çĕнетмелле, пурне те фронт нушисемпе интересĕсене пăхăнтармалла, хальхи вăхăтра сиенлĕ йăваш чунлăха, тимĕрлĕхе, мирлĕ строительство вăхăтĕнчи шухăш-кăмăлсене хирĕç татăклăн кĕрешмелле.

Пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсен, учрежденисемпе предприятисен руководителĕсен тата мĕнпур коммунистсен продукци ытларах туса кăларассишĕн вăхăта пăхмасăр çине тăрса ĕçлемелле. Предприятисенче организацилĕх, чăтăмлăх тумалла тата çирĕп дисциплина пулмалла. Мĕнпур рабочисемпе служащисене ĕçĕн тухăçлăхне халичченхи пек мар пысăккăн ӳстерме, социализмлă ăмăртăва сарса пыма тата стахановла методсемпе усă курма мобилизацилемелле. Производствăна хĕрăмсене явăçтарас тĕлĕшпе пĕрмаях ĕçлемелле, хĕрăмсен квалификацине ӳстермелле тата профессисене улăштарас движенине сарса пымалла.

Чарыков юлташ пуçламĕш парторганизацисен массăллă-политикăллă тата агитацийĕ ĕçе парти активне, обществăллă организацисене, ирĕклĕ обществăсене, Советсен депутачĕсене тата интеллигенцине анлăн явăçтарма кирлине палăртать. Кашни предприятинче, кашни учрежденире, кашни урамра, кашни çурт-йĕрте хальхи вăхăтра çĕршыв умĕнче тăракан ответлă задачăсене ăнлантарса парассине организацилемелле. Пăшăлтисене, «çĕнĕ хыпарсене юратакансене», сӳпĕлтисене хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешмелле. Агитацийлĕ-массăллă мĕнпур ĕçе вăрçă вăхăтĕнчи задачăсемпе çыхăнтарса, тыла та фронта çирĕплетессишĕн, тăшмана çĕмĕрсе тăкассишĕн туса пымалла.

Докладчик предприятисемпе учрежденисенче «Сывлăшран тата химиллĕ майпа тапăннинчен» сыхланмалли нормăсем тăрăх пĕтĕм ĕçсыннисене вĕрентме, инструкторсем тата штатлă личнăй состав хатĕрлеме организованнă, активлăн тытăнма кирлине палăртать. Предприятисенче, учрежденисенче запасра тăракан медсестрасем хатĕрлеме массăллă кружоксем организацилемелле, донорсем уйăрмалла, çар пĕлӳхне тата çар специальноçĕсене илме кружоксем тумалла. Пирĕн предприятисене, учрежденисене, çуртйĕрсене оборона крепоçĕсем туса хурар!

Чарыков юлташăн доклачĕ тăрăх пренире çичĕ çын тухса каларĕ.

Пристань начальникĕ Богоявленский юлташ Оборонăн Государственнăй Комитет Председателĕ Сталин юлташ радио-тăрăх тухса каланă сăмах работчисемпе служащисене пысăккăн çĕклентерни çинчен каласа панă.

— Пристань коллективĕ хăй çине татăклă обязательствăсем илнĕ тата вĕсем умне лартнă задачăсене пурнăçа кĕртсе пыма мобилизациленнĕ, тесе шутлать. Халĕ эпир самозащита, хурал дружинисене турăмăр. Сывлăшран килсе тата химилле майпа тапăнасран сыхланма вĕренетпĕр. Пирĕнпе пĕрле работницăсем, килхуçи хĕрарăмĕсем тата 8 çултан иртнĕ ачасем вĕренеççĕ. Военнослужащисен çемьисене ачасене пăхма, вутă турттарса парса пулăшатпăр, —терĕ Богоявленский юлташ.

Хулари çар комиссарĕ Моргунов юлташ совет патриотизмĕ вăйланса пынипе çинчен чарăнса тăчĕ.—Хулари военкомат ячĕпе,—тесе калать Моргунов юлташ,—фронта срокчен яма тата Хĕрлĕ Çар ретне хăйсен ирĕкĕпе кĕме заявленисем нумай килеççĕ.

Моргунов юлташ совет патриочĕсен чăн-чăн шухăшне палăртакан чылай заявленисем илсе кăтартать.

— Тăшмансем пирĕн социализмлă тăван çĕршыв çине тапăнчĕç—тесе çырать доброволец—граждан вăрçи участникĕ, ВКП(б) членĕ И. Ильин юлташ.—Эпир Октябрьти революцире çĕнтерсе илнине тăшмансем туртса илесшĕн, пирĕн совет халăхне пусмăр айне тăвасшăн. Татăклă вăхăт çитрĕ. Социализмлă тăван çĕршыва сыхлассинчен, Ленинла—Сталинла парти тата аслă Сталин юлташ ертсе пынипе алла хĕçпăшал тытса тĕрĕс ĕçшĕн, пусмăрти халăхсене Гитлер бандин пусмăрĕнчен çăлассишĕн çапăçнинчен хисеплĕ ĕç урăх çук. Мана хам ирĕкпе илсе действующи Хĕрлĕ Çара яма ыйтатăп».

Медсестрасен кĕске вăхăтлă курсĕнчен вĕренсе тухнă А. Пузанова (унăн икĕ пиччĕшĕ тата упăшки фашистла бандитсене хирĕç çапăçаççĕ), станковой пулеметран пеме вĕренсе çитнĕ Л. Уханова юлташсем фронта яма ыйтаççĕ.

Шупашкарти авторемонт заводĕнчи слесарь Якуб Мульштейн заявленине хумханмасăр вулама май çук.

— Эпĕ 20 çулта,—тесе çырать вăл.—Эпĕ еврей рабочи ывăлĕ. Эпĕ—Польша капиталисчĕсен пусмăрĕ айĕнче пурăннă еврей рабочи ывăлĕ—халăхсене пусмăрлакан çук çĕрте—Совет çĕршывĕнче кăна ĕçлев прави, кану тата вĕренӳ прави илме пултартăм. Германи фашисчĕсем Совет халăхĕн телейлĕ пурнăçне туртса илесшĕн. Анчах вăл пулас çук. Совет халăхĕ çĕнтерет.

Военком юлташ, Совет чиккисене тата совет халăхĕн телейлĕ пурнăçне сыхлама мана Хĕрлĕ Çар ретне илме ыйтатăп.

— Хамăр хулана тĕреклетер,—тесе чĕнет юлашкинчен Моргунов юлташ,—ăна оборонăн крепоçĕ туса хурар, аслă çулпуç Сталин юлташ кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртсе пырар.

— Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă хыççăн Шупашкарти швейнăй мастерскойри рабочисен производствăллă çĕкленĕвĕ татах вăйланчĕ, — тет Давыдов юлташ. — Рабочисем виççĕмĕш кварталти плана срокчен тултарма илнĕ обязательство ăнăçлăн пурнăçланнă.

Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă май, политикăллă-массăллă тата воспитани ĕçĕ тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинче ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Романова юлташ чылай чăрăнса тăчĕ.

— Рабочисем, служащисем тата вĕсен çемьисем,—тет Романова юлташ, —хальхи вăхăтра тăракан ыйтусемпе уйрăмах интересленеççĕ. Хулари пуçламĕш парторганизацисем массăллă-политикăллă тата агитацийĕ ĕçе парти активне, обществăллă организацисене, ирĕклĕ обществăсене, Советсен депутачĕсене тата интеллигенцине анлăн явăçтарма кирлине палăртать. Кашни предприятинче, кашни учрежденире, кашни урамра, кашни çурт-йĕрте хальхи вăхăтра çĕршыв умĕнче тăракан ответлă задачăсене ăнлантарса парассине организацилемелле. Пăшăлтисене, «çĕнĕ хыпарсене юратакансене», сӳпĕлтисене хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешмелле. Агитацийлĕ-массăллă мĕнпур ĕçе вăрçă вăхăтĕнчи задачăсемпе с

Паттăрăн çапăçăр, пулăр хăюллă! Этемлĕх тăшманĕ—фашизм тĕп пултăр!

☆ ★ ☆

Темиçе хут лайăхрах ĕçлер, хамăрăн Хĕрлĕ Çара фашистла çĕлен-калтасене пĕтерме пулăшар

Тăван çĕршыв хăрушлăх тухса тăнă кунсене пурăнса ирттерет. Икçĕр миллионлă совет халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывне тăшманран сыхласа тăма, тăшмана пуçĕпех пĕтерме отечественнăй вăрçăна çĕкленчĕ.

Мухтавлă Ленин—Сталин партийĕ ертсе пыракан совет профсоюзĕсем партие массăпа сыхăнтаракан организаци пулса тăраççĕ. Профсоюзсем граждан вăрçи çулĕсенче, коммунистла парти ертсе пынипе, çамрăк Совет республикин çĕршывне тăшманран тасатнă чухне фронтра тата тылра пысăк ĕçсем туса пынă. Профсоюзсем мирлĕ саманара пурăннă вăхăтра та Октябрьте çĕнсе илнисене çирĕплетсе пырас тĕлĕшпе сахал мар ĕçлерĕç.

Урса кайнă тăшман пирĕн тăван çĕршыв çине ултавлăн тапăнчĕ. Германи фашизмĕ Франци, Бельги, Голланди, Дани, Чехословаки, Норвеги, Югослави, Румыни, Греци тата ытти государствăсенчи халăхсене пусмăрта, асаплăхра усрать. Çавăн пекех вăл совет çĕршывĕнчи икçĕр миллионлă халăха пусмăра илсе кĕме шухăш тытнă. Фашизм хăйĕн ирсĕр ĕмĕтне нихăçан та пурнăçа кĕртеймĕ! Пирĕн аттесемпе пиччесем юнпа çĕнсе илнĕ пуянлăха фашизм ĕмĕрне те çĕнсе илеймĕ.

Ирсĕр тăшманăн вăйĕ пысăк. Вăл пур майсемпе те пире сиен кӳме тăрăшĕ. Эпир çакна пĕр самантлăха та манма пултараймастпăр. Пирĕн нихăçанхинчен те ытларах сыхăлăхлă пулмалла. Хуть мĕнле участокра та пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлемелле. Кашни профсоюз членĕ çакна асра тытса тăма тивĕçлĕ: «...пирĕн çĕршыври пĕтĕм халăх, мĕнпур рабочисем, хресченсем тата интеллигенци, арçынсемпе хĕрарăмсем хăйсен обязанноçĕсене, хăйсен ĕçне тивĕçлĕ ăнланулăхпа туса пырĕç. Пирĕн пĕтĕм халăх халĕ нихăçанхинчен те пĕтĕçӳллĕ тата пĕрлĕхлĕ пулмалла. Хĕрлĕ Çар, Флот тата Авиаци ытти нумайăшĕ кĕртмешкĕн, тăшмана çĕнтермешкĕн пирĕнтен кашниех хăйне тата ыттисене те чăнчăн совет патриотне тивĕçлĕ пек дисциплинăллă, организациллĕ пулма тата хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешме хушмалла» (В. Молотов юлташ каланă сăмахран).

Профсоюз членĕсен тивĕçлĕ задачи вăл—пур çĕрте те социализмла ăмăрту сарса пырасси. Çакна май ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, ĕç тухăçлăхне ӳстермелле. Государство пурлăхне, государство вăрттăнлăхне çирĕппĕн сыхласа усрамалла. Кашни профсоюз членĕн тăшмана уйăрса илме пĕлмелле.

Профсоюз руководителĕсем уменче пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсен профсоюз членĕсене çар ĕçне вĕренме пулăшмалла. Халĕ кашни профсоюз членĕ çар ĕçне çине тăрса вĕренме, хăйне кирлĕ çар специальноçĕ илме ĕмĕтленет. Çакна шута илсе, Осоавиахим, РОКК тата ытти обществăллă организацисен те хăйсен ĕçне лайăхлатмалла.

Политикăллă-массăллă ĕçе нихăçанхинчен те лайăхрах туса пымалла. Большевикла парти историне тата политикăллă, экономикăллă ыйтусене вĕреннипе пĕрлех ютçĕршыв чĕлхисене вĕренессине организацилемелле. Чăваш АССР Юстици Халăх Комиссариатĕнчи профсоюз организацийĕ нимĕç чĕлхине вĕренме кружок организациленĕ. Занятисем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ. Кулайăх пуçарува пур çĕре те сарса пымалла.

Донбасри шахтерсен арăмĕсем лайăх пуçару тунă. Кунта чылай хĕрарăмсем тăван çĕршыва сыхлама кайнисем выränне йышăнса шахтăра ĕçлеççĕ. Патриотла çак паха пуçару çумне ытти заводсемпе предприятисенчи нумай хĕрарăмсемпе хĕрачасем хутшăнаççĕ. Пирĕн, профсоюз организацисен руководителĕсен, килхуçи хĕрарăмĕсене вĕрентме тĕрлĕ курссем, семинарсем организацилемелле. Тăван çĕршыва сыхлама кайнă хуть те мĕнле работник ĕçне те кирлĕ вăхăтра хĕрарăмсемпе хĕрачасем туса пыма пултарччăр.

Профсоюз членĕсем! Эпир сирĕнпе хамăр организованно пулнине пĕрре кăна мар кăтартса панă. Çак историллĕ тапхăрта хамăр правительство, большевикла парти тата Аслă Сталин тавра тата та тачăрах пĕтĕçер! Пур те пĕр çын пек пулса, хамăр тăван çĕршыва сыхлама пĕрлешер! Мухтавлă та вăйлă Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота, Авиацине пулăшса пырар!

С. АСТАФЬЕВ.

Государство учрежденийĕсенчи рабтниксен Союзĕн Обком председателĕ.

Тыл фронта пулăшма яланах хатĕр

КУКЕÇ. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ, халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă май, Альгеш ялсоветне кĕрекен Кадыков ячĕпе тăракан колхозра тата «Чуваш. ЦИК», «8-ое марта» колхозсенче митингсем пулса иртрĕç.

«Чуваш. ЦИК» колхозра митинга пур колхозниксемпе колхозницăсем те тухнă. Вĕсем пирĕн çулпуç Сталин юлташ чĕнинне пысăк кăмăлпа хапăл туса йышăннине, тăшмана колхозри ĕçсене ударлă туса пынипе ответлеме хатĕрринех каласа пачĕç.

— Уборкăна хатĕрленес ĕçе васкатмалла. Ялхуçалăх машинисене июлĕн 10-мĕшчен юсаса пĕтермелле. Вăйлăн çитĕнекен тырпула пухса кĕме тухиччен государство умĕнчи хамăран мĕнпур парăмсене те парса татар, уйхирти хĕрӳ ĕçсем пынă вăхăтра парăмсене тӳлеме кайса вăхăта ирттерсе çӳремелле ан пултăр. Аш-какай, çамарта, çăм тата ытти поставкăсене те июлĕн 5-мĕш тĕлне парса татар. Тăшмана çапса салатма Хĕрлĕ Çара, Флота тата Авиацине ялан пулăшса пырар,—терĕç митинга пухăннă колхозниксем.

Г. КАДЫКОВ.

Ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Тыл фронт валли ĕçлет

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри 17 колхоз 1941 çулăн государствăна тырă пама пуçларĕç. 40 колхоз кăçалхи çулăн аш-какай тăратмалли обязательствăна çак кунсенче пĕтĕмпех тултараççĕ. «Динамо», «Дубовка» колхозсем 1941 çулта çу тăратмалли обязательствăна пĕтĕмпех тултарнă. Халĕ вĕсем çитес çулăн тӳлеççĕ.

Колхозниксен пĕр ĕмĕт — ирсĕр тăшмана, фашизма тĕппипех çапса хуçмашкăн Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота тата Авиацине пур майсемпе те пулăшса пырасси. Хĕрлĕ Çарăн, Флотăн тата Авиацин мĕн кирли пурте çителĕклĕ пултăр, вĕсем валли аш-какай, тырпул, сĕт-çу, çамарта т. ыт. те ытлăн-çитлĕн парар,—терĕç колхозниксем.

М. МАТВЕЕВ.

Медсестрасен курсĕ

КАНАШ. Хĕрарăмсем хамăрăн хăватлă Хĕрлĕ Çара мĕнпур май килнĕ таран пулăшма тăрăшаççĕ. ВЛКСМ райкомне медсестрасен курсне вĕренме илме заявленисем кулленех килеççĕ Çакна шута илсе ВЛКСМ райкомĕ пуçарнипе медсестрасем вĕрентсе хатĕрлекен курс организациленĕ. Çав курса вăтам шкулра вĕренекенсем тата çывăхри колхозсенчи колхозницăсем 80 çын çӳреççĕ.

К. НИКОЛАЕВ.

☆ ★ ☆

КАР ÇĔКЛЕН, ХАЛĂХ!

(„Если завтра война“ кĕввипе)

«Ыран вăрçă тухсан»,—юрласаччĕ ĕнер,
Ак çĕкленчĕ паян вăрçă вучĕ.
Тăшманпа çапăçма паттăрла çĕкленер—
Çĕн вăйпа халăх çĕн юрă хучĕ:

Çĕр çинче, сывлăшра, тинĕсре те
Пирĕн кĕвĕ хăватлă, хаяр:
— Халăх эс кар çĕклен,
Похода хатĕрлен,
Тăшмана тĕппипех аркатар!

Вăрçă вучĕ тухсан,—кар тапранчĕ çĕршыв
Кронштадтран Владивосток таран.
Кар тапранчĕ çĕршыв — пысăк, вăйлă çĕршыв,
Тăшмана аркатмашкăн хаярран.

Çĕр çинче, сывлăшра, тинĕсре те...

Ыткăнать самолет, хӳм сапать пулемет,
Вăйлă танк полкисем пуса тухрĕç,
Çĕнтерӳ походне ыткăнайĕç пехот
Харсăр татанкăсем ыткăнайрĕç.

Çĕр çинче, сывлăшра, тинĕсре те...

Фашистла ордаран сыхланатпăр эпир,—
Çапăçмашкăн эпир тăнă хатĕр,—
Хăйĕн çĕрĕ çинчех тăшмана тĕппипех
Пирĕн вăй пит хăватлăн аркатĕ!

Çĕр çинче, сывлăшра, тинĕсре те...

Халăх эс, кар çĕклен, походна хатĕрлен!
Барабан, вăйлăрах пантлаттарăр!
Музыкантсем, мала! Юрăçсем, малалла!
Çĕнтерӳ юррине янраттарăр!

Çĕр çинче, сывлăшра, тинĕсре те...

Пирĕн пек вăйлă вăй тĕнчипе те çук халь,
Çĕршыв пирĕн питех те халь вăйлă—
Сталинпа Тимошенко ялан пирĕнпе,
Пирĕнпех паттăр Клим Ворошилов!

Çĕр çинче, сывлăшра, тинĕсре те
Пирĕн кĕвĕ хăватлă, хаяр:
— Халăх эс, кар çĕклен,
Походна хатĕрлен,
Тăшмана тĕппипех аркатар!

В. И. ЛЕБЕДЕВ-КУМАЧ.

Пенси илме пăрахса—производствăна

УЛАТĂР. Павел Смолькин производствăра 35 çул, паровозсем юсакан заводра 10 çул хушши ĕçленĕ. Ватăлнă пирки ăна пенси çине куçарнă пулнă. Халь вăл пенси илме пăрахса производствăна—паровозсем юсакан завода каялла пынă.

— Мирлĕ вăхăтра эпĕ пенси илсе пурăнтăм. Халь, пĕтĕм халăх оборона валли ĕçленĕ вăхăтра, мана пенси кирлĕ мар, производствăна каялла каятăп, унта пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеме пулатăп. Производствăра дисциплинăна пăхăнса, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе тăшмана çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшас терĕм,—тесе çырать Смолькин юлташ. («Ленинский путь»).

«...пирĕн Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла çарĕн чи лайăх дивизийĕсене çапса çĕмĕрнĕ пулсан, çакă вара Гитлерăн фашистла çарне те çапса çĕмĕрме май пуррине тата Наполеонна Вильгельм çарĕсене çапса çĕмĕрнĕ пекех çапса çĕмĕрессине пĕлтерет». (И. Сталин).

Кукрыниксы художниксен ӳкерчĕкĕ. («Искусство» издательстви кăларнă плакатран тунă репродукци).

ТАСС фотохроники.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ

ÇĔРПУ. «Эпир большевиксен партийĕ тавра татах та таччăнрах пĕтĕçсе, хамăр вăя шеллемесĕр ĕçлесе, вăрçăпа килнĕ фашистсене хирĕç ĕç тухăçлăхне ӳстернипе тата дисциплинăна çирĕплетнипе ответлетпĕр»—тесçĕ профтехшкулта вĕренекенсемпе ĕçлекенсем. Çак сăмахсене пурнăçласа вĕсем ĕç тухăçлăхне кунран кунах ӳстерсе пыраççĕ. Уйăмăнах мастерсем—Полушина, Полищук, вĕренекенсем—Рауткина, Сорокин, Егорова т. ыт. те кулленхи нормăсене 140—160 процент таран тултарса ĕçлеççĕ.

Профтехшкулта вĕренекенсемпе ĕçлекенсем тăшмана çапса çĕмĕрме паттăр Хĕрлĕ Çара ĕç тухăçлăхне ӳстернипе пулăшса пыраççĕ.

В. МУРАВЬЕВ.

Хĕрарăм пур çĕрте те пысăк вăй

Совет хĕрарăмĕ предприятире те, колхозра та, учрежденире те пысăк вăй пулса тăрать. Кирлĕ чухне Совет хĕрарăмĕ фронтра та пысăк вырăн йышăнать. Фашистла Германие хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăра кашни Совет гражданинĕн ролĕ пысăк. Фашистла агрессорсене çапса аркатас ĕçе активлăн хутшăнас шутпа Чăваш АССР Наркомземĕнче ĕçлекен хĕрарăмсем медсестра ĕçне вĕренмелли курс уçнă. Çак курсра унччен санитарка ĕçне вĕреннĕ хĕрарăмсем халĕ медсестра ĕçне вĕренеççĕ. Вĕсене врач Осипова юлташ вĕрентет. Хĕрарăмсем медсестра пулма тăрăшса вĕренеççĕ.

Курсра вĕренекенсенчен Рогова тата Сударева юлташсем хăйсен ирĕклĕпе фронта кайма заявленисем панă.

— Фашистсене çапса аркатас ĕçре Совет хĕрарăмĕн ролĕ пысăк, хальтерех фронта яма ыйтатпăр, — тесçĕ вĕсем хăйсен заявленийĕсенче.

Практикăллă ĕçпе ответлеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă хыççăн районри учрежденисенче, колхозсенче митингсем пулса иртеççĕ.

Учрежденисенчи, предприятисемпе артельсенчи тата колхозсенчи митингсенче служащисемпе рабочисем, колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташ чĕнсе каланине ответлесе харпăрхăй вырăнĕнче пĕтĕм вăй-хала хурса, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеме пулаççĕ.

Районри нумай колхозсем Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ чĕнсе каланине ответлесе государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене срокчен тултарма, вăйлă тырпула ăнăçлăн пуçтарса кĕме кăтартуллăн хатĕрленме пулаççĕ.

Ваçкасси ялсоветне кĕрекен Ильич ячĕпе тăракан колхоз кăçалхи çулăн аш-какай, Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсем заемлăн укçа парса татрĕç. «Хĕрлĕ хир» колхоз июлĕн 3-мĕшĕнче колхозниксен митингĕ пулнă хыççăн государствăна пама 103 центнер, Хочат колхозĕ — 30 центнер гĕштырă тиесе ячĕç.

П. НИКИТИН.

БОЕВОЙ ЭПИЗОДСЕМ

ТАПАНАВА ÇИИĔНЧЕХ АРКАТНĂ

Каçхине пирĕн аэродром тĕлĕнче — «Хейнкель III» бомбардировщикĕсем курăннă. Вĕсем, пирĕн аэродром çине ăнсăртран килсе тапăнас тесе, хăйсен моторĕсене сасăсăр ĕçлеттернĕ. Анчах тăшман йăнăшнă. Эпир чĕнмен хăнасене Советăн хăюллă истребителĕсем тӳвăллă вутлă-хĕмпе кĕтсе илнĕ. Пирĕн истребительсем паттăррăн вĕçнĕ, тăшман хурчкин ирĕксĕрех каялла тармалла пулнă. Пулясем вĕçĕмсĕр пĕрĕхсе тăнă. «Хейнкельсенчен» пĕри хăйĕн çулĕпне хăвăртăн çухатма пуçланă, пирĕн истребитель тăшман машини çине татах та паттăррăн пырса çапнă. Бомбардировщиксем çĕр çине персе аннă.

Аэродромран инçетре взрыв пулнă сасăсем кĕмсĕртетсе илтĕннĕ. Истребительсем хыçалтан хӳтернĕ пирки Германи бомбардировщикĕсем хăйсен çулĕсене çухатнă, ниçта кайса кĕме аптранă енне запас хатĕрленĕ бомбисене вăрман çинелле пăрахнă.

МОТОРИЗОВАННĂЙ ПЕХОТАНА ПĔТЕРНИ

Нимĕç пехотин моторизованнăй колонни Р. хули енчен тухса, Совет çĕршывĕн граници еннелле куçнă. Вĕсене хирĕç пирĕн хĕрлĕ çăлтăрлă бомбардировщиксем вĕçсе тухнă. Скоростной машинăсен ушкăнне старший лейтенант Проценко ертсе пынă. Штурман Гладких Совет бомбардировщикĕсене шăп кирлĕ тĕле илсе пынă.

Шуçăм çутти катаран, тӳлеккĕн кăвакарнă. Анчах сывлăш лăпкă пулман. Тул çутăлнă çĕре тăшман колонни тĕлĕнче Совет бомбардировщикĕсен звени вĕçсе тухнă. Пытанса тăракан салтаксемпе офицерсен пуçĕсем çине йывăр калибрлă бомбăсем пĕрин хыççăн топри — вĕçе-вĕçĕн ӳкме пуçланă. Штурмансемпе стрелок-радистсем тăшманăн çул çинче пыракан машинисем скрипĕнсе тĕпреннине тата тăпра татăкăсем тусанланса мăкăрланнине асăрхаса илнĕ.

Бомбăсем пăрахасси лăпланнă. Летчиксем çапах та тăшманăн сапаланса кайнă колоннине куçран вĕçертмен. Бомбардировщиксен группин штурманĕ Гладких хăйĕн самолечĕсене каллех кирлĕ çĕре илсе пынă. Самолетсем вĕçнĕ хушăрах стрелок-радистсем тăшман çинелле çулăмлă кучченеç пĕрĕхсе пынă.

Колонна хăвăртах сапаланнă. Тăшманăн пысăк çухатусем пулнă. Пирĕн самолетсем каллех хăйсен малтанхи вырăнĕсене тавăраннă.

ТАНКСЕН КĔТĔВĔ ÇИНЕ

Капитан Березин ертсе пыракан эскадрилья пĕр кун хушшинче аэродром çинчен тăваттăмĕш хут çĕкленнĕ. Совет Союзăн Геройĕ старший лейтенант Стольников тата старший политрук орденоносец Макаров ертсе пыракан машинăсем хăвăрт вĕçсе хăпараççĕ.

Тăшман танкĕсем Т. хула çывăхĕнче, вăрманта тăнă. Пирĕн эскадрилья бомбардировщикĕсем 600 метр çулĕшĕнчен персе, танксем колоннине тĕрлĕ сериллĕ бомбăсен çумăрĕ айне тунă.

Танксен колонни хыççăн моторизованнăй пехота пынă. Бомбардировщиксем кĕрлеттерсе вĕçме тытăннă. Пур еннелле те сапаланса тăракан нимĕç салтакĕсене стрелок-радистсем пулеметсенчен персе, пĕрин хыççăн теприне çĕре ӳкернĕ.

Тепĕр сехетрен çак колонна патне бомбардировщиксем çĕнĕ составлă бомбăсемпе тавăраннă.

Стрелок-радист старший сержант Пташкин тĕпренсе ваннă машинăсен пехоти вăрмантан сапаланса тарнине курнă. Кун çинчен вăл штурман Пшеничнăя пĕлтернĕ.

Бомбардировщиксем каллех çирĕп тĕллев тупнă. Стрелок-радистсем пулеметран персе, вăрманта пытанса тăракан тăшмансене часах парăнтарнă.

ФАШИСТСЕН КАРАПЕСЕНЕ ПУТАРНА

Совет çĕршывĕн çыранĕсенчен инçетре пĕр судно ишнĕ, вăл пирĕн К. хула еннелле çул тытнă. Тăшман пирĕн çĕршыв çине десант антарса хăварма ĕмĕтленнĕ.

Совет разведчикĕсем тăшманăн тискер шухăшне чăтăмлăн йĕрленĕ, ăна часах туйса илнĕ. Разведкăран данайсем илсе, старший лейтенант Проценко эскадрильи аэродром çинчен çичĕ-çичĕмĕш хут çĕкленсе тухнă.

Хыçалта тăван çырансем юлнă. Скоростной машинăсем тинĕс çинче вĕçнĕ. Аялта транспортнăй суднăсем пурăнса асăрханă.

Гладких ертсе пыракан звенон штурманĕ машинăсене шăп вĕсем каяс тĕле илсе пырать. Бомбăсен серийĕ аялалла вĕçет. Штурман Гладких бомбăсем икĕ карап çине тĕл пырса тивнине палла тăвать. Ку вăл—Проценко тата старший политрук Чижиков ертсе пыракан машинăсен экипажĕн çитĕнĕвĕ.

Бомбăсемпе пересси чарăннă. Çак вăхăтра Германин «Мессершмитт-109» истребителĕсем çавтери питĕ пысăк хăвăртлăхпа вĕçсе, пирĕн бомбардировщиксем патнелле сывхарнă. Вĕсем пирĕн бомбардировщиксен стройне хĕсĕнсе кĕме ĕмĕтленнĕ, анчах вĕсем ĕмĕтленни ахалех пĕтнĕ. Пирĕн бомбардировщиксем таччăн та хăюллăн вĕçнĕ.

Стрелок-радистсем «Мессершмиттсен» тăватă атакине хăюллăн çапса салатнă. Трассирующи пулясем тăшман истребителĕ çине вирлĕн пыра-пыра выртнă. Тăшман суднисем пĕрин хыççăн тепри шыв айнелле путнă. «Мессершмиттсем» бомбардировщиксен звенинчен аяккалла пăрăнса, кăнтăр еннелле тарнă.

КАЛЛЕХ ТАНКСЕН КОЛОННИНЕ ХИРĔÇ

Çак кунсенче пулнă чи юлашки вĕçĕве майор Шафранский ертсе пынă. 21 сехетре скоростной бомбардировщиксем сайралса юлнă танксен колонни тĕлне вĕçсе хăпарнă.

Хаяр та вăйлă хурçăн темиçе пинтер килограмĕсем аялалла вĕçнĕ. Пытанас шухăшпа таракан тăшманăн танксĕсене пирĕн стрелок-радистсем пулеметран вĕçĕмсĕр персе тăнă. Çак тӳрĕ те вырăнлă стрельбана флагмански машинăн стрелок-радисчĕ кĕçĕн лейтенант орденоносец Клещин ертсе пынă. Старший лейтенант орденоносец Лонге ертсе пыракан машина хăй хăвăрттăн вĕçсе пынă вăхăтрах тăшмана пысăк çухатусем тутарса амантнă.

МАШИНАСЕМ АЭРОДРОМА ТАВĂРНАÇÇĔ

22 сехет тĕлне юлашки эскадрилья хăй вырăнне вĕçсе тавăраннă. Тăшманăн истребителĕсемпе çавтери хаярран вăрçнă пулсан та, вăл фашистла вăрăхурахсен аллине лекмен. Ирсĕр тăшмансен пульлисем тивнипе чылаях аманнă машинăсем те хăйсен базисене ăнăçлăнах вĕçсе çитнĕ. Командир Головко тата штурман Горцев ертсе пыракан машинăна тăшмансем хытă амантнă, пулясемпе шрапнельсем шăтарса пĕтернĕ. Çапах та пирĕн летчиксем ăна хамăр аэродром çине илсе çитернĕ.

Çак кун Н-ски авиачăсри бомбардировщиксемпе истребительсем тăшмансен 9 самолетне персе антарнă.

Летчиксем каннă. Боевой машинăсем патĕнче хĕрӳ ĕç вĕренĕ—халь кăна çапăçуран тавăраннă машинăсене самолет техникĕсем тимлĕн тĕрĕсленĕ. Вăхăт нумай та иртмен, техниксем—Туфанов, Максимов, Мальчевский, Лебедов, Осипов т. ыт. те командир патне пырса бомбардировщиксем çĕнĕ вĕçеве каллех хатĕрри çинчен пĕлтернĕ.

Аэродромра лăпкă. Анчах, боевой тревогăн сигналĕ янрасан, совет машинĕсем нимĕн тăхтаса тăмасăр, куç хĕснĕ хушăрах, сывлăша хăвăрттăн çекленме пултараççĕ. Ылханлă тăшмана вĕсем ним юлмичченех çапса салатма хатĕр тăраççĕ.

ПЕРЕПРАВĂШАН ПЫНĂ ÇАПАÇУ

Тĕтĕмпе усă курса, нимĕçсем Д. местечко районне пехотăн пысăк соединенине танксемпе тата бронемашинăсемпе илсе пынă, Н-ски стрелковăй полкăн сылтăм флангне хăратса тăнă. Пысăк мар юханшыв урлă каçмалли вырăна туртса илсен, противник пирĕн наступлени туса пыракан полк çине пăшалтан, пулеметран, артиллерирен питĕ вăйлăн пенĕ.

— Тăшмана ялтан хăваласа кăлармалла, переправăна çавăрса илмелле, юханшыв урлă каçмалла—çакăн пек приказ илнĕ капитан Чернухинăн батальонĕ.

Вырăнпа пĕлсе усă курса батальон ăна панă танкпа тата полковой артиллерин взвочĕпе пĕрле шоссе çулĕ хĕррипе малалла кайнă. Малта разведка — лейтенант Алтуховăн взвочĕ пынă.

Тăшман пулеметран персе тăнине пăхмасăрах разведчиксем противник йышăнса илнĕ ял патне çывхарса çитнĕ. Тăшманăн огневой точкисене карттă çине ӳкерсе илнĕ. Çил арманĕ патĕнче танксене хирĕç кĕрешмелли тупă пытанса тăнă. Çуртсем çийĕнчен пысăк калибрлă пулеметран пенĕ, пысăках мар тĕмескесем хыçĕнчен станковăй пулеметсенчен пенĕ. Кĕпер патĕнче бронемашинăсем тăнă. Хăюллă разведчиксене курсан, нимĕçсем татах та вăйлăрах пеме пуçланă. Противнике хирĕç вăрçă тухсан, лейтенант Алтухов батальон командованийĕ патне лару-тăру мĕнли çинчен донесени янă.

Батальон ĕçе тытăнчĕ. Вăрман хĕррине тупăсем лартнă. Малтан икĕ хутчен пенипех тăшманăн автобронемашинăсене пĕтерсе тăкнă. Ку вăл—кĕçĕн лейтенант Зубенко батарейи тӳрĕ пенин результачĕ. Часах тăшманăн çил арманĕ патĕнчи туппине те артиллерирен персе çĕмĕрсе тăкнă. Совет танкĕсем малалла кайнă. Вĕсем пулăшнипе пехотинецсем малалла куçнă, вĕсем окопсене вырнаçнă тăшман çине вăйлăн пенĕ.

Обстановка пирĕн батальон тăшман çине шоссе çулĕн икĕ енĕпе те наступлени тума хушнă. Нимĕçсем пенĕ пирки часть икке пайаннă. Сылтăм флангри ротăсене командовать тăвас ĕçе батальон штабĕн начальникĕ лейтенант Мусаджий хăй çине илнĕ. Ыраш, клевер çинче пытанса тата кашни лупашкапа усă курса, ротăсем шанчăклăн наступлени туса пынă.

Çĕрле нумай сехет хушши хĕрӳллĕн çапăçнă хыççăн тăшман пĕтĕ пуçланă. Ку вăл боеприпассем киличчен батальона вăхăтлăха оборона линине йышăнма хушнă. Патроннăй пункта кайма çăмăл пулман. Кашни тĕмеске çине пысăк калибрлă пулеметсенчен персе тăнă. Анчах та патронсене часах илсе пынă.

Çĕрĕпех пăшалсенчен персе тăнă. Артиллерирен пере-пере çĕмĕрнĕ хыççăн, полк командирĕн приказĕ тăрăх батальон ирхине татăклă наступлении куçнă, «урра» кăшкăрса атакăна кайнă.

Сылтăм енче кĕçĕн лейтенант Киселев тата лейтенант Аширбаев подразделенийĕсем çапăçнă. Вĕсем вăйлă пенипе тăшмана пысăк çухатусем тунă. Хăйĕн геройлăхĕпе танковăй пулеметчик кĕçĕн сержант Пенахов, красноармеецсем Секретарев, Могильницкий тата ыттисем те пример кăтартнă. Танксене хирĕç кĕрешмелли тупăсен уйрăм взвочĕн командирĕ кĕçĕн сержант Маенко хăй аманнă пулин те, тăшмана пĕрмаях çĕмĕрсе пынă.

Хĕрлĕ Çаран паттăр боецĕсен наступленийĕ çавтери вăйлă пулнă, нимĕçсем каялла чакнă чухне кĕпере те çĕмĕрме ĕлкĕреймен. Вĕсем юханшыв çине сиксе çăлăнма тата ишсе каçма хăтланнă. Анчах та вĕсене пур çĕрте те пирĕн боецсем пени тата вырăс штыкĕ пĕтерсе пынă. Противнике пĕтернĕ. Батальон юханшыв урлă каçнă, лайăх позицине йышăннă, боевой çĕнĕ задачăна пурнăçлама хатĕрленнĕ.

Действующи арми.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен июлĕн 5-мĕшĕнче шупса иртнĕ черетлĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информацин Бюровĕн начальникĕн заместителĕ С. А. Лозовский юлташ çапла пĕлтернĕ: совет çĕрĕн туртса илнĕ кашни метрĕ Германишĕн хакла ларать. Малтанлăха шутланă тăрăх, вăрçă пуçланнă хыççăн иртнĕ малтанхи вуникĕ кун хушшинче Германин, вилнисемпе аманнисене пĕрле илсен, пурĕ 700 пин çынна яхăн пĕтнĕ.

Малалла Лозовский юлташ Германи пропаганди пĕлтернисем çинче тарăнса тăнă. Унăн пĕлтерĕвĕсем тăрăх, пĕтĕм тĕнче ССР Союзĕпе Англие хирĕç тăрать пулать, румынсем, венгерсем, словаксем тата итальянецсем Германин тĕнчери гегемонийĕшĕн хăйсен пуçĕсене те хума «халăр тăрăççĕ» пулать. Чăннипе ĕç мĕнле-ха? Лозовский юлташ документа—секретнăй предписание вуласа кăтартать. Германин çĕмĕрсе тăкнă бронетанковăй бригадин штабне çавăрса илсен, çав документ пирĕн пата унпа пĕрле лекнĕ. Вăл документра çапла каланă: советăн нефтьлĕ районне йышăнас ĕçе çакăн пек тумалла: венгерсем çав района ниепле майпа та туртса илме ан ĕлкĕрчĕр. Иккĕмĕшĕнчен, ăна туртса илес ĕçе словакисен отрячĕ те хутшăнать, çавăнпа та, венгерсем словаксене хирĕç тăни ан пултăр тесе, словаксен отрядне Германин войсковой часĕсене парса пулăшмалла.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсене документ фотокопине салатса панă.

Çулте асăннă документа вуласа панă хыççăн, Лозовский юлташ çапла каланă: çакă вăл союзниксен войскисем евĕрлĕ мар, вăрă-хурахсен шайккисем евĕрлĕ, вăрă-хурахсем пĕр-пĕрне шанмаççĕ, çаратса тупнă япалашăн пĕр-пĕринпе çапăçма та пултараççĕ.

Совет Союзĕпе Япони хушшинчи отношенисем çинчен панă ыйту пирки Лозовский юлташ çапла ответленĕ: г. Коноэпе г. Мацуока декларацине илсен, унтан çакă курăнать: Япония Совет Союзĕ çине Германия тапăниччен малтан йышăнса тăнă позицирех юлать.

Иден выступленийĕ

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕш. Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден, Лидсре сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çапла пĕлтернĕ: «Эпир Гитлерпа нимĕнле обстоятельствăсенче те тата нимĕнле ыйту тăрăх та калаçусем тума шутламастпăр. Эпир вăрçă тĕлĕшпе тăвакан мероприятисене Гитлера пĕтĕмĕшпех пĕтерсе хуричченех вăйлатса пыратпăр. Гитлер большевизма хирĕç кĕрешекен крестоносец позицине йышăннă. Часах акă вăл миршĕн тăракан этем вырăнне тăрса та сăмах тухса калĕ. Эпĕ çапла каласа пĕлтерни Гитлер мир тума паракан кирек-мĕнле сĕнӳ çине те Англи правительстви мĕнле пăхассине малтанах палăртса тăрать».

Германия Россия çине тапăнса кĕни çинчен тапратса, Иден çапла каланă: «Вырăс войскисем калама çук вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Кĕтмен хушăран тапăнма Гитлерăн пур майсем те пулнă. Агрессор хăйне валли яланах юрăхлă самант пырама пултарать. Анчах та, çакă уççăнах курăнса тăрать: вырăссем тĕлĕнмелле хастарлăхпа çапăçаççĕ. Вĕсем противника хирĕç вăйлăн пыра-пыра çапса ответлеççĕ. Эпир вырăссене тата Гитлера хирĕç кĕрешекенсене пурне те мĕн май килнĕ таранах пулăшас шутпа пĕтĕм вăйсене хуратпăр. Германие поражени кăмелли пĕтĕмĕшлĕ задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе вăрçă енчен те, экономика енчен те пĕтĕмĕшпех пĕр шухăшлă пулатпăр. Эпир нименĕле оговоркăсем тумасăрах тата тĕрлĕрен шухăшсемсĕрех Россие пĕрле вăй хурса кĕрешме пулатпăр. Пирĕн задача—Гитлера пĕтерсе хурасси. Çак задачăна пурнăçа кĕртиччен эпир хамăрăн вăйсене чакармастпăр, тата çав задачăна пурнăçа кĕртес çĕрте пире пулăшакансене эпир пурне те саламлатпăр».

Германи,—тесе каланă малалла Иден, — ютçĕршывсене туртса илес çĕрте мĕнле те пулин пĕр çĕршывпах тата пĕр континентпах чарăнса тăмасть. Тĕнчере пуçпулса тăмалла—акă Гитлерăн тĕллевĕ. Малалла Иден çапла каланă: «Халĕ Англи авиацийĕ Германия тата вăл оккупацинленĕ территорисем çинче кăнтăр кунĕнчех вĕçет. Иртнĕ çулла Германи самолечĕсем пирĕн утравсем тĕлĕнче вĕçсе çӳренине кашниех астăваççĕ пулĕ. Хальхи вăхăтра мĕн пулса иртни—вăл пуçламăшĕ кăна. Эпир хамăрăн авиацие Германи авиацийĕ тĕлĕшпе, çапăçун кирек-хăш вырăнĕнче те пуçпулса тăричченех туса пыратпăр. Сахал пулни ниепле те лăплантармасть пире. Çакна хамăрăн вăйланса пыракан авиаци промышленноçĕ пулăшнипе, империн вĕçĕмсĕр нумай ресурсĕсем пулăшнипе, Пĕрлерӳллĕ Штатсен ресурсĕсем пулăшнипе пурнăçа кĕртĕпĕр. Çав вăхăтрах Германи çине пăрахакан взрыв тăвакан япаласен хисепĕ уйăхран уйăхах ӳссе пырĕ. Германин промышленноçлă пурнăçне ытларах та ытларах пысăк вăйсемпе пыра-пыра çапĕç.

Германия Россия çине тапăннă хыççăн хăйсен ирĕклĕхне пысăккăн хаклакан пур çĕршывсенче те хăйсен вăйĕсене икĕ хут ӳстермелле. Çитес темиçе уйăхра вăрçă татах та вăйлăн пулса пыма пуçлĕ. Гитлер кама та пулин улталать-и, хăратать-и, пурпĕрех,—унăн тĕп тĕллевĕ—пуçпулса тăрас тĕллевĕ улшăнмасть. Гитлер Германи халăхне çак вăрçа пула тухса тăракан йывăрлăхсене чăтăмлăн тӳссе ирттерме чĕнет. Гитлер аллинчи радио Германи халăхне çапла асăрхаттарать: Россие хирĕç тăвакан вăрçă Германие аманнисемпе поездсем йышлăн пырса тăрассине пĕлтерет. Çакна нимĕçсем хăйсен çĕрне хӳтлеме пултарччăр тесе мар, ытти халăхсен çĕрне тухса илес шутпа тăваççĕ. Çакă вăл патриотизма питех те ирсĕррĕн пăсни пулать!

Гитлер политикинче татăклă улшăнусем пулнине кăтартакан паллăсем Германире хăйĕнче те курăнаççĕ, уйрăмах Россия тĕлĕшпе унăн юлашки вăхăтра тунă ĕçĕ обществăллă шухăша пăтраштару кĕртрĕ.

Гитлерăн «çĕнĕ йĕрки» çинчен тапратса, Иден çапла каланă: ун пек çĕнĕ йĕрке пулма пултараймасть. Вăл йĕрке авалхи тирани пулса тăрать. Гитлерла тĕнчере çынсем хушшинчи, государствăсем хушшинчи пĕртанлăх çук. Гитлер çапла ĕмĕтленет: çав тĕнчере пĕр Гитлер кăна хуçа пулса пурăнтăрччĕ, пуçпулса тăракан пĕр государство — Германия кăна пултăрччĕ. Ытти çĕршывсем вара Германин влаçра тăракан çыннин вутă çураканĕсем, шыв кӳрекенĕсем кăна пулса тăччăр. Гитлер усă курма тытăннă хыççăн, мĕнле те пулин власть парĕç тесе, квислингсене, лавальсене ĕненме пулать-и-ха. Пуканелле правительствăсене туса хурса, вĕсене Гитлер планĕ тăрăх пĕтерсе тăкаççĕ. Вăрланă çĕрсене унăн çыннисене параççĕ. Анчах ун пек положени хăйсен ирĕкĕпе пĕр шухăшлă пулса пурăнассине те, мирлĕ пурнăçăн çирĕп никĕсĕсене те туса хума май памасть.

Иртнĕ 20 çулсен урокĕ, тесе каланă Иден малалла, çакăнта пулать: хаярлăхăн вăйĕсене çине тăрса кĕрешекен çынсемпе, государствăсемпе кăна, чикĕсене, ирĕклĕхе хӳтлессишĕн тата çав хӳтлĕхĕн йывăрлăхĕшĕн ответлăха хăйсем çине илме хатĕр çынсемпе тата государствăсемпе кăна тăлласа лартма пулать.

Хальхи вăхăтра пыракан вăрçăра Англия материаллă выигрышсем тума тата территорисем те ыйтма йышăнманнине палăртса, Иден: Англия государствăсемпе пĕрле, çĕнĕ Европăн никĕсĕсене хывма, Гитлер тиранине пĕтĕмпех пĕтерсе хурĕ, çакна вăл пурнăçа кĕртетех, тесе каланă.

(ТАСС).

Турци премьер-министрĕ Сайдам сăмах калани

АНКАРА, июлĕн 5-мĕш. Анкарари радио пĕлтернĕ тăрăх, Турцин премьер-министрĕ ĕнер тĕнчери лару-тăру тата правительствăн тулашри политики çинчен меджалисре (парламентра) сăмах каланă.

Германи ССР Союзне хирĕç пуçланă вăрçă пирки пулса тăнă обстановка çинчен тапратса, Сайдам: Турция малашне те нейтралитет политикине тытса пырĕ, тесе палăртса тунă. Правительство тытса пыракан нейтральнăй политика, тесе каланă малалла Сайдам, Турцине унăн кӳршисем хушшинче йĕркеллĕ отношенисем туса хума май пачĕ. Германипе Совет Союзĕ хушшинчи конфликт тĕлĕшпе нейтралитет политикине тытса пыни договор тăрăх илнĕ обязательствăсемпе килĕшӳллĕ пулса тăрать тата Турци интересĕсенчен тухса тăрать.

Турцине Германи тата Итали хушшинчи отношенисем чылай лайăхланнине кăтартса парса, Сайдам Турцине Англи хушшинче тытса пыракан туслă отношенисене палăртса тунă. Турцине Англи хушшинчи отношенисем, — тесе пĕлтернĕ Сайдам,—пĕр-пĕрне ăнланса илнĕ никĕс çинче пулса пыраççĕ.

(ТАСС).

Германия суйса пĕлтернисем çинчен Рейтер агентстви мĕн калать

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Германи командованийĕн сводкисенче икĕ кун умлăн-хыçлăнах Англири тĕрлĕрен хуласем çине бомбăсем пăрахни çинчен каланă. Анчах, Германи самолечĕсем пырса бомбăсем пăрахни Англире хăйĕнче нимĕн те паллă мар. Иртнĕ 48 сехет хушшинче Англи çине Германин пĕр бомбине те пăрахман.

Кунпа пĕрлех тата нимĕçсем Англин сывлăшри çухатăвĕсене ӳстерсе кăтартнине те паллă тăвас пулать.

Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартакан движени

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕн Англири посолĕ Майский юлташ ячĕпе Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартакан çырусемпе телеграммăсем халĕ те çав-çавах пит нумай пыраççĕ. Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем пит чаплăн кĕрешнишĕн савăннине кăтартса паракан çырусен шутĕнче,—Англири Испани çамрăкĕсен «Хувентуд эспаньсла» ятлă организацийĕсенчен янă çыру та пур. Вăл çырура çапла каланă: «Эпир сирĕнтен совет çамрăкĕсене, хăйсен çĕршывне Германи фашисчĕсем тапăннинчен хӳтлекен çамрăксене, пирĕнтен тăванла ырă сунса янисене тата вĕсемпе çирĕп пĕрлĕхлĕ пулни çинчен пĕлтерме ыйтатпăр. Испани халăхĕ, хăйĕн çĕршывне Германипе Итали фашизмĕнчен хӳтленĕскер, çакна манмасть: хăйĕн кĕрешĕвĕнче вăл совет çĕршывĕнчи мĕнпур халăхсем тата советăн хастарлă çамрăкĕсем енчен пулăшнине тата хăйсемпе пĕр шухăшлă пулнине туйса тăнă. Испани çамрăкĕсем, хăйсен çĕршывне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекенскерсем, çакна пĕлсе тăраççĕ: халĕ Совет Союзĕн Хĕрлĕ Çар, сывлăш-çар тата тинĕс-çар флочĕн речĕсенче çапăçакан геройла çамрăксем Испани халăхĕн тата пĕтĕм тĕнчери халăхсен пуласлăхĕпе ирĕклĕхне хӳтлеççĕ. Хамăрăн çĕршыва ирĕке кăларассишĕн, фашистла террора пула асапланса пурăнакан çĕршер пин çамрăк испанецсене ирĕке кăларассишĕн кĕрешнĕ çĕрте эпир совет халăхĕпе совет çамрăкĕсен героизмĕпе хăюллăхĕ çинчен яланах асра тытса тăратпăр. Эпир шансах тăратпăр: Германи халăхĕн пусмăрçисене совет çарĕ ĕмĕрлĕхех пĕтерсе тăкĕ. Совет Союзĕн ĕçĕ пирĕн ĕç тата пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă мĕнпур арçынсемпе хĕрарăмсен ĕçĕ пулса тăрать».

Англири Сурçĕрти Çар округĕнчи 15 салтак çакăн пек телеграмма янă: «Паттăрăн хирĕç тăрса çапăçма Хĕрлĕ Çара чĕререн ырлăх сунатпăр».

Брадфордри (Йоркшир) технически колледжăн вĕренекенĕсем совет посолĕнчен ССР Союзĕнчи халăхсене пĕтĕм чĕререн саламланисене тата çитĕнӳсем тума суннисене калама ыйтнă. «Эпир,—тенĕ чĕнсе каланинче, — сирĕн çĕршывра çамрăксем валли пит нумай туса панине пĕлетпĕр. Эпир, пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă çамрăксемпе пĕрле, Совет Союзĕн халăхĕсене вĕсен кĕрешĕвĕнче пысăккăн пулăшма пулатпăр».

Электриксен союзĕн Лондонри отделенийĕ йышăннă резолюцире çапла каланă: «Эпир хамăрăн ССР Союзĕнчи тăвансемпе, хальхи вăхăтра хăйсен çĕрне фашистсем хĕçпăшалпа тапăннинчен хӳтлекен тăвансемпе пĕр шухăшлă пулни çинчен пĕлтеретпĕр. Эпир вĕсене хăвăртрах çитĕнӳсем тумашкăн тата хăвăртрах çĕнтермешкĕн сунатпăр, çав çĕнтерӳ пĕтĕм тĕнчери халăх массисен пурнăçне çăмăллатĕ».

Грантхэмри (Линкольн графствинчи чугунçул центрĕ) тред-юнионсен советчĕ çакăн пек резолюци ярса панă: «Совет ССР Союзне тăванлăн ырă сунать, совет халăхĕпе тата Хĕрлĕ Çарпа вĕсен кĕрешĕвĕнче пĕтĕмпех пĕр шухăшлă пулнине кăтартать. Совет, фашизма пĕтерсе тăкас çĕрте, Совет Союзне пулăшакан мĕнпур мероприятисем майлă тăрать».

Фулхмри (Лондон) электростанцине пысăклатса аслăлатас çĕрте ĕçлекен рабочисем пурте пĕр шухăшлă пулса резолюци йышăннă, унта ССР Союзĕнчи халăхсен кĕрешĕвĕшĕн савăннине кăтартса панă. «Эпир,—тесе каланă резолюцире, — национал-социализмпа фашизм мĕнпур çĕршывсене хăратса тăнине пĕтерсе хуричченех сирĕнпе пĕрле кĕрешме тупа тăватпăр».

Тайн юханшывĕ çинчи судостроительнăй пысăк верьфри рабочисем «Ленинградри судостроительнăй верфьсенче ĕçлекен хăйсен юлташĕсемпе çирĕппĕн пĕр шухăшлă пулнине кăтартса параççĕ тата фашистла агрессора хирĕç кĕрешнĕ çĕрте ССР Союзне пур енчен те пулăшма пулаççĕ».

Совет халăхĕн кĕрешĕвĕпе савăннине кăтартса паракан резолюцисене чылай организацисемпе халăхăн тĕрлĕ сийĕсен представителĕсенчен те илнĕ.

Тарса каçнă Эркки Нуутинен тата Унто Сеппяля салтаксем каласа пани

Эркки Нуутинен тата Унто Сеппяля — Хельсинки хулинчи рабочисем. Пĕр уйăх каярах вĕсене ытти рабочисемпе пĕрле çара илсе пынă. Вĕсем белофинсене ССР Союзне хирĕç вăрçă авантюри тума кирлĕ пулнă. Гаубичнăй пĕрремĕш батарейăра çакă икĕ рабочи тĕл пулнă тата ют интересемшĕн кĕрешме кирлĕ марри çинчен килĕшсе татăлнă. Вĕсем кашниех май пулсанах Совет Союзĕ енне каçма хăйсене сăмах панă. ССР Союзĕ çине бандитла талăннă хыççăн, темиçе кун иртсен, Эркки Нуутинен тата Унто Сеппяля совет чикки патне сывхарнă. Фронт линийĕ урлă каçсанах вĕсене малти дозорсем ярса тытнă.

Пирĕн умра салтак тумĕпе тумланнă çав рабочисем лараççĕ. Вĕсем хăйсен çĕршывĕнчи пурнăç, Германипе финн фашизмĕ пусмăрланă пурнăç çинчен кĕскен тата хумханса каласа параççĕ.

— Çак вăрçăн тĕллевĕ халăхшăн ют, — каласа парать Эркки Нуутинен, —Финляндире 1897 çултан пуçласа 1921 çула çитичченхи вăхăтра çуралнă арçынсене мобилизацилеменĕ. Халăх вăрçасшăн мар. Арçынсем тараççĕ, тăванĕсем патĕнче тата вăрмана кайса пурăнаççĕ. Нумайĕш пунктсенче мобилизаци йĕркипе 25 процентран мала пухăнман. Финляндри халăхĕ çакна ăнланать. Рабочисемпе хресченсем вăрçă вĕсене пысăк йывăрлăх кӳнине ăнланса илме пуçларĕç.

Юлашки вăхăтра пурнăç йывăрланса çитрĕ. Апат-çимĕçсем çитмеççĕ, ĕçĕрлĕх тата продуктсен хакĕ ӳсет. Çитменнине тата пирĕн пата нимĕçсене илсе килчĕç. Çапла каласаççĕ пирĕн патра:

— Нимĕçсене мĕншĕн пирĕн пата илсе килнĕ? Пирĕн çăкăра çимеç-и, вăл пирĕн ахаль те сахал. Совет Союзĕ халĕ пире нимĕн те памасть.

Юлашки вăхăтра çарти апат-çимĕç начарланчĕ, салтак каç пулнă çĕре выçса çитнине туять. Махорка пачах çук.

Эркки Нуутинен хăйĕн юлашки сăмахĕнче хумханса çапла калать:

— Эпĕ Совет Союзĕпе вăрçма шутламан. Çавнашкалах, ман пекех тата манăн юлташ Унто Сеппяля пекех, пиншер салтаксем вăрçасшăн мар.

— Пирĕн халăха темиçе çул хушши ĕнтĕ улталаççĕ, Совет Союзĕпе хăратаççĕ, — каласа парать Унто Сеппяля. —Халăхăн чăн шухăшне полици хаярăн, тискерле путарса пырать.

— Эпир пĕлсе тăратпăр, — каласа парать Унто Сеппяля,—пирĕн пример тăрăх нумай салтаксем эпир тунă пек тăвăç. Вĕсем вăрçасшăн мар. Совет Союзĕ çинчен тĕрĕс каласа парас тата вăрçа пуçарса яракансем пирки кашниех айăплă пулнине палăртас шутпа, эпир Финлянди çарĕнчи салтаксем патне чĕнсе калани сыртăмăр. Акă вăл.

Эпир карандашпа çырнă хут татăкĕсене пăхса тухатпăр. Финн рабочийĕсен чăн шухăшĕсене кунта фашистла диктатура тата террор чарма пултараймасть. Эркки Нуутинен тата Унто Сеппяля çапла çыраççĕ:

«Финн салтакĕсем! Эпир, Финн çарĕнчи салтаксем Унто Сеппяля тата Эркки Нуутинен, хамăр ирĕкпе Совет Союзĕ енне куçрăмăр. Чикĕ урлă каçсан, пире юлташсем пек кĕтсе илчĕç тата пире лайăх апат-çимĕç пачĕç.

Эпир вăрçасшăн мар, анчах Финляндри правительстви пирĕн çĕршыва Германи фашисчĕсене сутрĕ, пире Совет Союзне хирĕç ăссăр вăрçа явăçтарчĕ, эпир ăна нихăçан та кĕтмен.

Нимĕçсем тытса илнĕ çĕршывсенче выçлăх, чухăнлăх пуçпулса тăни çинчен эсир илтнĕ тата вуланă пулмалла. Норвеги, Голланди, Бельги, Чехи тата ытти çĕршывсенчи халăхсем мĕнле чухăнлăхра пурăннине эсир пĕлетĕр.

Фашистсем вĕсене выçлăхсăр тата йĕплĕ проволоксемсĕр пуçне нимĕн те пама пултараймарĕç. Финлянди валли те вĕсем çавнах хатĕрлеççĕ.

Эпир, сирĕн юлташсем, сире çак юнлă вăрçа пĕтерме, Совет Союзĕпе пĕрле çĕршывран нимĕç фашисчĕсене тата правительствăна хăваласа кăларса яма Совет çарĕсем енне куçма чĕнетпĕр.

Эпир шантарса калатпăр: сире кунта лайăх кĕтсе илеççĕ. Эсир çителĕклĕ таран апат-çимĕç илĕр, сирĕнпе кунта ăшă кăмăлпа калаçăç.

Армейски иккĕмĕш корпусри, виççĕмĕш бригадăри, пĕрремĕш батарейăри салтаксем:

ЭРККИ НУУТИНЕН тата УНТО СЕППЯЛЯ».

Действующи армн. (ТАСС).

Румыни фашисчĕсен тылĕнче лăпкă мар

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 5-мĕш. (ТАСС). Румыни халăхĕн Германи оккупанчĕсене тата вĕсен агентурине — Антонеску правительствине хирĕç пыракан кĕрешӳ вăйланса пыни çинчен Румынирен кашни кунах сведенисем килсе тăраççĕ. Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Румынин хĕвелтухăç районĕсенче кăна вырăнти халăхран 30.000 çын саботаж тăваççĕ тата çар объекчĕсене çĕмĕреççĕ. Уйрăмах, вĕсем нефтехранилищĕсене пĕтерес тĕлĕшпе çине тăраççĕ.

Рейтер агентстви Германи оккупанчĕсен çарĕсене хирĕç демократиллĕ элементсем кĕрешнипе пĕр вăхăтрах Румынири железногвардеецсем те вăйлăн кĕрешеççĕ, тесе пĕлтерет. Çакă Германине хирĕçле активлă организаци, Германин окупациллĕ çарĕсене хирĕç вăйлăн кĕрешекенскер, тесе çырать агентство, çĕршыва Германи фашисчĕсем пусмăрланнине аван курать тата вăл Германи фашисчĕсене вĕсем кăçалхи январь уйăхĕнче легионерсен пăлхавне пуçтарса лартнăшăн тавăрать.

Çиçĕм пек хăвăрт çапма ĕмĕтленни пурнăçа кĕреймерĕ

Нимĕçсен тытăна лекнĕ салтакĕсем каласа пани

Нимĕçсен сакăр салтакĕ офицерпа пĕрле пирĕн тыла пырса кĕнĕ. Вĕсене разведка тума тата мĕн курни çинчен ыйтнă. «Эпир,—тенĕ чĕнсе каланинче, — сирĕн çĕршывра çамрăксем валли пит нумай туса панине пĕлетпĕр. Эпир, пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă çамрăксемпе пĕрле, Совет Союзĕн халăхĕсене вĕсен кĕрешĕвĕнче пысăккăн пулăшма пулатпăр».

Электриксен союзĕн Лондонри отделенийĕ йышăннă резолюцире çапла каланă: «Эпир хамăрăн ССР Союзĕнчи тăвансемпе, хальхи вăхăтра хăйсен çĕрне фашистсем хĕçпăшалпа тапăннинчен хӳтлекен тăвансемпе пĕр шухăшлă пулни çинчен пĕлтеретпĕр. Эпир вĕсене хăвăртрах çитĕнӳсем тумашкăн тата хăвăртрах çĕнтермешкĕн сунатпăр, çав çĕнтерӳ пĕтĕм тĕнчери халăх массисен пурнăçне çăмăллатĕ».

Грантхэмри (Линкольн графствинчи чугунçул центрĕ) тред-юнионсен советчĕ çакăн пек резолюци ярса панă: «Совет ССР Союзне тăванлăн ырă сунать, совет халăхĕпе тата Хĕрлĕ Çарпа вĕсен кĕрешĕвĕнче пĕтĕмĕшпех пĕр шухăшлă пулнине кăтартать. Совет, фашизма пĕтерсе тăкас çĕрте, Совет Союзне пулăшакан мĕнпур мероприятисем майлă тăрать».

Фулхмри (Лондон) электростанцине пысăклатса аслăлатас çĕрте ĕçлекен рабочисем пурте пĕр шухăшлă пулса резолюци йышăннă, унта ССР Союзĕнчи халăхсен кĕрешĕвĕнче пысăккăн пулăшма пулатпăр».

Тайн юханшывĕ çинчи судостроительнăй пысăк верьфри рабочисем «Ленинградри судостроительнăй верфьсенче ĕçлекен хăйсен юлташĕсемпе çирĕппĕн пĕр шухăшлă пулнине кăтартса параççĕ тата фашистла агрессора хирĕç кĕрешнĕ çĕрте ССР Союзне пур енчен те пулăшма пулаççĕ».

Совет халăхĕн кĕрешĕвĕпе савăннине кăтартса паракан резолюцисене чылай организацисемпе халăхăн тĕрлĕ сийĕсен представителĕсенчен те илнĕ.

Нимĕçсен сакăр салтакĕ офицерпа пĕрле пирĕн тыла пырса кĕнĕ. Вĕсене разведка тума тата мĕн курни çинчен ыйтнă. Çапăçусенче ăна нумай войскăсемпе тĕл пулма тивнĕ, анчах та, хăй каланă тăрăх, вăл Совет Российĕнни пек техникăна тата унăнни пек вăйлă çара ниçта та курман.

— Хĕрлĕ Çар çавтери вăйлă,—каласа парать ефрейтор Баумгартен. — Çакна нимĕçсем кĕтменччĕ.

Каласу вĕçленсе пырать. Этцвайлер ефрейтор вăрçă çинчен çавтери тарăхса калать.

Германи халăхĕ çапăçса ывăннă. Вăрçа фашистсем пуçласа ячĕç. Салтаксене пĕрремĕш хут мар фронта хăваласаççĕ. Эпĕ службăра тăнă батальонра СССР Союзне кăмăллакансем нумай пулнă. Анчах, Россия çине наступлени тăвасси çинчен пĕлсен, эпир приказ пăсма хăяймарăмăр. Рота командирĕ, салтаксен шухăш-кăмăлне сиссе пулас, çапла каларĕ: кам çапăçăва каймасть, ăна вырăнтах персе вĕлереççĕ, терĕ. Çав кунах пирĕн батальон советăн йывăр танкĕсемпе тĕлĕпулчĕ, пирĕн батальона пĕтерсе тăкрĕç.

Тыткăна лекнисем юлашкинчен çапла каласаççĕ:

— Çиçĕм пек хăвăрт пырса çапасси пулаймарĕ—вăл паллă ĕнтĕ.

Б. АФАНАСЬЕВ.
(ТАСС спецкорĕ).

Действующи арми.

Красноармеецсен хăюллăхĕпе паттăрлăхĕ

Тăшман хăяр, парăнасшăн мар. Анчах, ирсĕр действийсене пирĕн Хĕрлĕ Çар чаçĕсем хăватлăн пырса çапаççĕ. Фашистсем ăçтан пырса кĕнĕ, çавăнтах хăйсен пуçĕсене çухатаççĕ.

Военфельдшер, чăваш ачи П. Семенов вăрçăн малтанхи кунĕсенчех хăйĕн хăюллăхĕпе паттăрлăхне кăтартрĕ. Вăл чылай боецсене вилĕмрен çăлса хăварчĕ.

...Фашистсен икĕ батальонĕ пирĕн çине наступленипе тухрĕç, вĕсен 16 танк. Хаяр та хĕрӳллĕ çапăçу пуçланчĕ. Çапăçура батальон командирĕн Морозов юлташăн стройран тухмалла пулчĕ. Батальона ертсе пыма Семенов юлташ хăй çине илчĕ.

Пирĕн красноармеецсемпе командирсем хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапаçаççĕ. Тăватă сехет хушши вăйлăн çапăçнă хыççăн, пирĕн батальон, Семенов юлташ ертсе пынипе, фашистсен икĕ батальонне çĕмĕрсе тăкрĕ, чылайăшне тыткăна илтĕмĕр.

Çапла, кашни кунах, кашни сехетрех усал тăшмана хирĕç пыракан хаяр çапăçура паттăрсем çуралса тухаççĕ.

Политрук заместителĕ
Н. ГОРДЕЕВ.

Действующи арми.

Çул çинче

Пире Г. хулари ĕççыннисем ăшшăн ăсатса ячĕç: фашистсене тĕп тума сывлăх сунчĕç.

Поезд малалла васкать. Вагонсенче хĕрӳллĕ ĕç пырать. Комсомол организацийĕ, стена хаçат редколлегийĕ — кашни хăйĕн ĕçне тăвать.

Çамрăк патриоткăсен шухăш-кăмăлĕ часрах фронта çитсе Хĕрлĕ Çар боецĕсене пулăшу парас ĕмĕтпе тулнă. Хĕрачасенчен чылайăшĕ кăçал медтехникумран вĕренсе тухнă, вĕсем фронтăн кирек мĕнле участокĕнче те пулма хатĕр.

Медсестрасем кашниех вырăна çитсен хăйсенĕ фронтăн хаяр çапăçу пыракан участокĕсене яма ыйтаççĕ, вĕсем пурте пĕр сын пек пулса донорсен списокне çырăнчĕç, тăван çĕршывшăн, мухтавлă Хĕрлĕ Çар боецĕсен сывлăхĕшĕн хăйсен юнне пама хатĕр.

Кашни сехетрех малалла, фронт çывăхнерех... Сестрасем каллех тепĕр хут военно-полевой хирурги ĕçне вĕренме тытăнчĕç, вĕсем хăйсен пĕлӳне татах тепĕр хут тĕрĕслесе пăхрĕç.

Врач И. СТОЛЯРОВ.

Пирĕн ял хĕрĕ

Сĕтел çинче пĕчĕк конвертлă çыру выртать. Настаç инке ку çырăва темиçе хут та вуларĕ. Вăл хăйĕн савнă хĕрĕ фронтра аманнă красноармеецсене пысăк паттăрлăхпа медицинăллă пулăшу парса тăнишĕн савăнать.

Настаç инке хĕрĕ çырать:

«Юратнă атте-анне! Паянхипе эпĕ пиллĕкмĕш кун ĕнтĕ фронтра. Çак пиллĕк кун хушшинче темиçе красноармееца вилĕмрен çăлса хăвартăм. Çын пурнăçĕ пирĕншĕн хаклине туйса, эпĕ хамăн ĕçе тĕплĕн тăватăп, аманнисене сыватассишĕн тем пек хытă тăрăшатăп. Пирĕн богатырь-боецсем ăçта — эпĕ те унтах. Вăрçăра аманнисене çавăнтах суранĕсене çыхса яратăп, çийĕнчех пулăшатăп.

Пĕрре акă мĕнле ĕç пулчĕ: красноармеецсем тăшман çине «урра» кăшкăрса атакăна кĕрсе кайрĕç. Çав вăхăтра кĕçĕн политрук аманса ӳкрĕ. Эпĕ ун патне хăвăрт чупса çитрĕм те суранне майласа çыхма тытăнтăм. Политрук йăлтах тăнран тухнă. Мĕн тăвас? Ăна халех госпитале леçмелле. Эпĕ хамăн юлташа—сестрана чĕнсе илтĕм. Унтан вара эпир, политрука носилка çине хурса, госпиталь еннелле утрăмăр. Пуç тăрринчен ирсĕр тăшманăн пульлисем шăхăрса иртеççĕ. Пĕр виçĕ чалăш çеç кайма ĕлкĕртĕмĕр: ман юлташ ӳкрĕ. Амантăм, ура пĕçерет—вăйсăррăн ответлерĕ сестра. Тăшман пульлисем çаплах çăтăкăнăн шăхăра-шăхăра иртеççĕ. Çакăн пек йывăр саманта кĕçĕн политрука госпитале йĕркеллех илсе çитертĕмĕр.

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар ылханлă фашизм çарне пысăк çухатусем кӳрет. Хĕрлĕ Çар хăюллăн тата паттăрлăн çапăçать.

Юратнă анне, тăшмана çапса аркататпăрах. Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулать!

Сире паттăр красноармеецсенчен — салам!

Сирĕн Марье.

Действующи Хĕрлĕ Çар».

Кӳ çырăва Настаç инкен савнă хĕрĕ—Мария Васильева çырнă.

Васильева юлташ ялти шкулта çичĕ çул вĕреннĕ хыççăн, ялсоветра счетовод пулса ĕçленĕ. Хăйĕн ĕçне юратса туса пынă. Çакăн хыççăн, 1937 çулта, Канашри фельдшерсен шкулне медсестрасем хатĕрлекен отделенине кĕчĕ. Вăл шкултан пур дисциплинăсемпе те «отлично» тата «хорошо» паллăсемпе вĕренсе тухрĕ.

Вĕренсе тухнă хыççăн, чи малтан больницăра, кайран—санитарнăй вагонсинче ĕçлерĕ.

Фронта тухса кайиччен вăл Канаш станцинчи санпунктра сестра пулса ĕçлерĕ. Васильева юлташ лайăх ĕçшĕн пĕрре çеç мар хаклă премисем тата благодарнăçсем илнĕ.

Пултаруллă медсестра Мария Васильевна паян фронтра. Мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа пĕрле вăл хăйĕн вырăнĕнче тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлесе, фронтра пирĕн паттăр боецсене çĕнтерӳсем тума пулăшать, хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешет.

Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Мария Васильевнăн фронтри ĕçĕсемшĕн тивĕçлипе савăнаççĕ. Вĕсем хăйсен ялĕн хĕрне вăрçă хирĕнче медсестра ĕçне мухтавлă туса пыма сывлăх сунаççĕ, колхозра тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе, пысăк çитĕнӳсем тума сăмах параççĕ.

П. ЧИЧКАНОВ.

Яманкас, Канаш р.

Занятисем йĕркеллĕ пулаççĕ

ÇЕМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Июлĕн 1-мĕшĕнче ФЗО шкулĕнче пур группăсенче те занятисем вăхăтра, йĕркеллĕн пуçланчĕç. Шкулта 10 группа, кашни группа çумне квалификацилле мастерсем çирĕплетнĕ.

Малтанхи кунра мастерсем вĕренекенсене вĕренӳ программисемпе, производство йĕркипе паллаштарчĕç. Ун хыççăн вĕренекенсен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ пулса иртрĕ.

Вĕренекенсене таса та илемлĕ общежитисене вырнаçтарнă, шкултах столовăй та йĕркеллĕн ĕçлеме пуçларĕ. Вĕренекенсем кашниех отлично вĕренме сăмах пачĕç.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2